НОЯБРЬ/ЧӲК
11 № 2014



**Ольга ПРОХОРОВА:**
***«Этемĕн чунпа та, ӳт-пĕвпе те хитре пулмалла, çамрăксен «Самант» çырăнмалла!»***

ХЫПАР
12+

# САМАНТ

# Чăваш тĕнчине вăратнă поэт





– Кам вăл Михаил Кузьмин? – тесе ыйтсан пиртен чылайăшĕ шухăша каять. Çеçпĕл тесен вара пурте тӳрех хуравлаççĕ: çулăмлă поэт! Вăхăт шунă май Михаил Кузьминпа Çеçпĕл Мишши пĕр-пĕринчен татах та пайланса, икĕ уйăрăм тĕнче пулса пыраççĕ-тăраççĕ. Çак шухăша уçăмлатма çавра çулпа кайса пăхар-ха: пысăкки инçетрен курăнать.

Çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ – Çеçпĕл Мишши – ноябрĕн (чӳкĕн) 16-мĕшĕнче 115 çул тултарчĕ. Чăваш халăхĕн çулăмлă пророкĕ пурнăçран уйрăлса кайни часах ĕмĕр çитет – унăн поэзийĕн сăнарлăхĕ, витĕмлĕхĕ, хальхиллĕхĕ вара паян та тин çеç туптанă хурçă пек янăрать, сăввисене поэт ĕнер кăна çырнă тейĕн. Тĕлĕнсе пĕтерейместĕн Çеçпĕл таланчĕнчен: мĕнле пултарнă çав таранччен?! Тепĕр енчен илсен вара – шухăшламалла та аптрамалла: поэт мĕн ĕмĕтленни, мĕне ĕненни, мĕне шанни – пурнăçланайман апла? Çапла пулса тухать: чăваш шăпи сарă кун çĕршывне çитеймен, пирĕн пуласлăх халь таранччен ыйтуллă. Çавăнпа ĕнтĕ Çеçпĕл пултарулăхĕ паянхи кун та актуаллă.

Аслă поэтăмăр юбилейне чысласси ноябрĕн 14-мĕшĕнче пуçланчĕ. Çеçпĕл Мишши скверĕнче шкул ачисем, студентсем, çыравçăсем, хастар чăвашсем пуçтарăнчĕç. Культура министерстви, Çеçпĕл Мишши фончĕ тата профессионаллă писательсен союзĕ йĕркеленĕ чыслă митинга Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай ертсе пычĕ. Вĕренекенсем Çеçпĕл сăввисене тĕрлĕ чĕлхепе – вырăсла, таджикла, акăлчанла калама тытăнсан уяр сивве пула çӳçен тытнă йывăççем те шăн ĕнтĕркинчен вăранса тураттисемпе ал çупрĕç!

Уяв курултайĕ вара Канаш районĕнче Çеçпĕл ялĕнче иртрĕ. Поэтăн çĕнетсе юсанă бюсчĕ умĕнче сăмах тухса калакансем Çеçпĕл Мишширен паян кун та вĕренмелли нумайййине палăртрĕç. Тăван халăхăн ирĕклĕхĕн, хăйтĕллĕнлĕхĕн, аталанăвĕн, пуласлăхĕн символĕ Çеçпĕл Мишши. Унăн поэзийĕн хăвачĕ – халăх хевтин-терменĕн иксĕлми пайĕ.

Юбилей уявĕсем тăван халăх Çеçпĕл Мишшине мĕнлерех йышăннине курăмлăн палăртрĕç. Поэт пурнăçра мĕнлерех çын пулни пире пит интереслентермест. Революцин хĕрӳллĕхне чĕререн парăннă Михаил Кузьминăн – Чăваш автономи облаçĕн ревтрибунал председателĕн чунĕ гранитран та çирĕпрех тесе калас килет. Çав вăхăтрах Анастасия Червяковăна чĕререн юратакан йĕкĕтĕн çырăвĕсене вулатăн та – Михаил Кузьмин ытла та ачаш та çепĕç чунлă пек туйăнать. Вилĕм тата пурнăç ыйтăвĕсене алă пусса татса панă çынах-ши вăл?

Поэзири Çĕçпĕл Мишши вара пач урăх этем: пĕччен пуçпах вăл – хăй пин-пин çын, вăл тăван халăхĕпе тӳперен анакан саспа калаçать, унăн сулмаклă сăмахĕ вутран хĕрӳ, унăн шухăшĕсем малашлăха кĕпер хываççĕ. Çеçпĕл пултарулăхĕнчи литература геройĕ пирĕн пурнăçа килет-кĕрет те – вара чăн чĕрĕлсе тăрать! Акăакă, кăшт кăна юлнă! – вăл ыйхăри Чемен паттăра вăратать, вара вĕсем иккĕшĕ чăваш тĕнчине кутăн çавăрса хураççĕ.

Шел, ĕлкĕреймест Çеçпĕл пирĕн пурнăçа юмахри улăпа – Чемен хал-паттăра чĕнсе илме. Çапах та пурпĕр эпир шанатпăр: Çеçпĕл сăввисем çăлтăр çути тĕнче уçлăхне касса тухнă пек пурнăç анлăшĕпе чарăнайми ыткăнса-вĕçсе паттăртан-паттăр Чемен патне çитеççех! Вара вăранĕ тарăн ыйхинчен пăхаттир, тухĕ пирĕн пата. Çеçпĕл те анĕ чăвашсем патне тӳперен... Вара ыйтĕ вăл пиртен: «Ăçта хастарлă, хыт утăмлă чăваш ачисем? Вут кайăклăн вĕçекенсем, самана уттинчен юлманнисем – ăçта?»

Акă кам вăл чăннипе пирĕншĕн Çеçпĕл Мишши!

**В.СТЕПАНОВ**

# "Вĕрентекен пур чухне вĕрен, студент!"

***Нумаях пулмасть алла «Тăван Атăл» журналăн 2013 çулхи улттăмĕш номерĕ лекрĕ. Уйăхсерен тухса тăракан чăваш журналне вулама çав тери кăсăклă пулчĕ. Ман шутпа, унта паянхи чăваш литератури мĕнлерех çулпа аталанса пыни уçăмлăн йĕрленет. Журнал страницисенче çĕнĕ ятсене, çĕнĕ хайлавсене асăрхасассăн вара чун хĕпĕртет. Литература çулне тин çеç ура ярса пуснă пултаруллă маттурсем çуркунне çурăлакан папкасем евĕрех туйăнаççĕ мана. Вĕсен пултарулăхĕ малтанлăха пысăк шайрах мар пулин те, çапах вĕсенче пысăк шанăç.***



Асăннă журналта Ольга Австрийская ятне асăрхарăм. Çивĕч ăс-тăнлă хĕр пĕрчи пултарулăхĕ пирки унччен те илтнĕччĕ, çавăнпа та çамрăк çыравçăн çĕнĕ хайлавĕпе хаваспах паллашма васкарăм. «Миххи пĕви» калавне вуласа тухнă хыççăн чунта ўссе пыракан шанăç çĕнĕ вăй илнине тўрех ăнланса илтĕм. Енчен те сăмах ăстисем хушшинче Оля пек ырă ĕмĕтпе çунакан, чунри тасалăха мала хуракан, çутă шанăçпа пурăнакан çынсем тупăнсан пирĕн литература малашлăхĕ тĕтреллĕ чатăрпа нихăçан та витĕнмĕ.

Ольга Австрийская (чăн хушамачĕ Иванова) – Вăрнар районĕнчи Пăртасра çуралса ўснĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлў паракан вăтам шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухсан Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш филологийĕпе культура факультетне çул тытать. Ольăн амăшĕ Ираида Федоровна Иванова та асăннă факультета пĕтернĕ (ун чухне – историпе филологи факультечĕ).

Пултаруллă хĕрĕн мĕнпур хайлавне вуласа тухнă хыççăн вăл калем тытсах çуралман-ши текен шухăш та пуça килчĕ. Оля хăй «вăрттăн» пĕлтернĕ тăрăх вара, кукамăшĕ юмахсем каласа парса унăн çырас туртăмне вăратнă. Чи малтана калăпăшĕпе пысăках мар сăвăсемпе калавсем хайлама тытăннă вăл. 3-мĕш класра Ольăн хăйĕн кĕнеке ăсталас ĕмĕт çуралнă. Ўркенмен хĕр пĕрчи тетрадьсенчен пĕчĕк кĕнекесем калăплама тытăннă. Вăл ўкерме те юратнă. Çавăнпа та пĕрремĕш хайлавсемсĕр пуçне çак кĕнекесенче ўкерчĕксене те курма май пур. Хăйне майлă ăсталанă пĕрремĕш кĕнеке «Чăх чĕппи» ятлă пулнă. Хăюлăх çитерсе хĕрача çак кĕнекене хăйĕн пĕрремĕш вĕрентекенне Елена Павловна Сергеевăна кăтартнă. Учитель Оля ĕçне ырланă, ăшă сăмахсем каласа малалла çырма хавхалантарнă.

4-мĕш класра Ольăн «Ачапча» хаçатра пĕрремĕш хайлавĕ – «Ухмах патша» юмахĕ – пичетленсе тухать. «Хаçат страницинче хамăн юмаха курсан мĕн тери хĕпĕртенĕччĕ», – аса илет пултаруллă хĕр. 6-7-мĕш класенче хастар Оля «Çĕнтерў çулĕ» Вăрнар район хаçатне сăвăсемпе юмахсем ярсах тăнă. Хайлавĕсем пичетленнине кура хĕрĕн çырас туртăмĕ вăйлансах пынă. Кĕтмен çĕртен алла гонорар илсессĕн хĕрача пушшех малалла талпăнма хавхаланнă. Пысăках мар укçа пулсан та, çапах хăв тăрăшнипе каштах нухрат илме пултарни çав тери савăнтарнă ăна.

Университета вĕренме кĕрсен хĕрĕн çырас пултарулăхне Елена Петровна Чекушкина (Елен Нарпи çыравçă) аталантарса пынă. Ольăн хайлавĕсемпе статйисем «Тантăш», «Çамрăксен хаçачĕ», «Тивлет», «Çĕнтерў çулĕ» хаçатсенче тата «Тетте», «Самант» журналсенче пичетленме тытăннă.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш курссем хыççăн Оля пĕрле вĕренекен хĕр тусĕпе «Тантăш» хаçат редакцийĕнче «çу каçнă», çырас ăсталăха якатса пынă. «Ыттисен ашшĕ-амăшĕ пулсан: «Хулара мĕн туса çўрен, ялта пахча тулли ĕç!» – тесе вăрçатчĕç те пуль. Мана вара килтисем ятламан, ăнланма тăрăшнă. «Аталанма май пур чухне – аталан», – тенĕ кăна. Çавăншăн вĕсене пысăк тав сăмахĕ калас килет», – каласа парать Оля.

5 курс вĕçĕнче Ольга Австрийская «Тантăш» хаçат редакцине ĕçлеме вырнаçать. Çапла майпа ача чухне çуралнă ĕмĕчĕ тулать хĕрĕн. Хăйĕн ĕçне вăл юратсах пурнăçланă, чун ыйтнипе çырнă.

Оля пĕр вăхăт «Тантăш» хаçатăн çамрăксен политикин пайĕн редакторĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл – Чăваш кĕнеки издательствинче ачапăча литературин пайĕн редакторĕ. Кĕнеке издательствине куçсан хĕрупраç малтан корректорта тăрăшнă. Çак ĕç Ольăна яланах кăсăклантарнă, анчах унăн яваплăхĕ те пысăк. Корректор ĕçне шахтер профессийĕпе танлаштарать вăл. «Шахтера çĕр пусарнă пек, корректора та йăнăшсем пусарса лартма пултаруççĕ», – тесе асăрхаттарать.

Издательство хăйне евĕрлĕхĕсене хăнăхсан, ĕç юхăмне кĕрсе çитсен пултаруллă та тăрăшуллă хĕре редактор вырăнне шанса параççĕ. Михаил Мерченĕн «Вĕççĕр çул», Альбина Юратăвăн «Туслă çемье», Светлана Гордеевăн вырăсла-чăвашла çырнă «Корзинка с грибами» («Карçинккари кăмпасем») сăвă кĕнекисене редакциленĕ вăл.

Шкул ачисемпе студентсене Ольга Австрийская уроксемпе мăшăрсенче тимлĕ пулма ыйтать, вĕрентекенсем панă пĕлў пурнăçра кирлĕ пулать тесе ĕнентерет. «Вĕрентекен пур чухне вĕрен, студент!» – çак канаша кашнин асра тытмаллине асăрхаттарать.

Ольга Австрийская калавĕсемпе сăввисенче тĕрлĕ тема çутатать. Пултарулăхне кăшăлласа тăраканĕ вара – кăмăл-сипет ыйтăвĕ. «Этемĕн мĕнле пулмалла, ырăпа усала мĕнле уйăрмалла, кăткăс пурнăçра хăв вырăнна еплерех тупмалла – çак ыйтусем хумхантараççĕ те ĕнтĕ мана», – палăртать Ольга Австрийская.

«Миххи пĕви» фэнтезийĕ те çак шухăшсене çирĕплетет. Психологилле хайлав кашни вулакан чĕринче хăйĕн вырăнне тупать. Калавра дидактикăлăх та пур. Этемĕн тĕрлĕ-тĕрлĕ усал ĕçсемпе хăйĕн чысне вараламалла мар тет автор. Таврара тискерлĕх алхассан та çав авăра лекесрен сыхланма тĕрек тупмаллах, усал вăй умĕнче халсăр пулмалла мар. «Миххи пĕви» фэнтези – пур ўсемри вулакансемшĕн кăсăклă хайлав. Унта çĕкленнĕ кăмăл-сипет проблемисем яланах актуаллă.

**Анастасия ВЛАДИМИРОВА**

**КĔСКЕН**

Ольга Австрийская – И. Ивник ячĕллĕ премийĕн, «Анлă Атăл çамрăклăхĕ» регионсем хушшинчи XII конференци-фестивалĕн лауреачĕ. Раççей Федерацийĕн Правительствин (2011), Чăваш Республикин президенчĕн (2011), Чăваш Республикин Пуçлăхĕн (2013) стипендиачĕ.

# Аркаим тата унăн тĕкерĕсем

## Хуласен çĕршывĕ

***1987 çул, çĕртме уйăхĕ. Челябинск облаçĕ, Брединскпа Кизильск районĕсен хутлăхĕ. Аслă Караганкăпа Утяганка çырмисем пĕрлешнĕ тĕлте С. Боталов тата В. Мосин ертсе пыракан Уралпа Казахстан археологи экспедицийĕ туй-пăхăр (бронза) тапхăрĕнче – 3600-3900 çул каялла – çынсем пурăннă хулаша тупать. Вăл 20000 тăваткал метр лаптăк йышăнать. Шалти карманăн (цитаделĕн) диаметрĕ 85 метр, тулаш стенасен диаметрĕ 143-145 метр. Хулашра нӳхреплĕ-вучахлă 67 кил-вырăн тупнă. Вĕсенчен 40-шĕ – тулаш ункăра, 27-шĕ шалаш ункăра вырнаçнă. Хулаш тĕккинче хĕвелленĕ (тĕнче кĕтессиленĕ) 4 хапха.***

Уралпа Казахстан çеçен хирĕсенче сĕм авалхи цивилизацийĕн йĕррисем нумай. Çавăнпа ĕнтĕ çак тăрăха урăхла «Хула ел», «Хуласен çĕршывĕ», «Хуласен тĕнчи» (Страна городов, Градарика) теççĕ. Авалхи арисен малтанхи тăван çĕршывĕ шăпах кунта пулнă тесе калаççĕ. Аркаим вара вĕсен тĕп хули имĕш. Арисен (индоевропеецсен) сĕм авалхи тăван çĕршывĕ тесе çеç мар, хăват вырăнĕ, этемлĕх цивилизацийĕн сăпки тесех хаклаççĕ авалхи хулаша. Аркаим тенине Йима (Иран мифологийĕнчи патша) ячĕпе çыхăнтараççĕ те Заратуштра (Зороастр) пророк та Кăнтăр Уралта çуралнă тесе те «çирĕплетеççĕ».



Çак вырăн карман (крепость) çеç мар, бронза шăратакансен хули те, сăваплă хула обсерватори те пулнă. Хулан хальхи ячĕ – Аркаим. Çак ят мĕнле пулса кайнине темĕнпе те çыхăнтараççĕ. Тĕрĕссипе вара хулашран 4 çухрăмра касăрăлса тăракан Аркаим сăртран вăл. Çапла вара – хулаш ячĕ тĕрĕк чĕлхинчен кĕнĕ. Вырăсари культурине çĕклекенсем кунпа килĕшмеççĕ. Арк сăмах авал упана пĕлтернĕ тесе хулаш ятне çак чĕрчунпа çыхăнтарни – чи ансатти темелле. Чи кăткăс ăнлантару вара тĕнче тытăмĕпех çыхăннă.

Аркаима тĕпчекен археологсем, историксем, этнографсем йышлă пулнипе никама та тĕлĕнтерейменĕ. Хулаш çинчен кино чăн малтан французсем ӳкернĕ – ку та хăй евĕрлĕ паллă. Авалхи хулана экстрасенсем, паломниксем, тĕрлĕ секта çыннисем, чиртен сывалас шанчăклисем, чăн-чăнлăх çутине курас текенсем те вĕçĕмсĕр çӳренине шута илсен вара – Аркаим илĕртӳлĕхĕ ыт-ахальтен сиксе тухман тесех калас килет. Урал кăвапи – тĕнче кăвапи тесех ĕнентереççĕ чылайăшĕ.

Аркаим шăпи асамлă темелле. Вăл сывлăшран алă тупанĕ çинчи пекех курăнса выртать. Аслă Караганка пĕвине тума палăртсан ăна çӳлтен фото ӳкернĕ, анчах никам та ăна пĕлтерĕшлĕ палăк тесе йышăнман. 1987 çул тĕлне Караганка çырмине пĕвелеме пур документацие те çирĕплетнĕ, алă пуснă. Строительство ĕçĕсем анлăн пуçланнă, тĕкĕлекен пĕвене те хăпартса ĕлкĕрнĕ. Юханшыва пĕвелесе хурасси кăшт çеç юлнă. Аркимăн шыв тĕпне юлас шăпине нимĕн те улăштарайманнăн туйăннă. «Уралти Тройăна» упраса хăварас тесе ăсчахсем, журналистсем, пултарулăх çыннисем кар тăнă. Эрмитаж директорĕ Б.Пиотровский академикăн тата СССР Наукăсен академийĕн Урал уйрăмĕн президиумĕн председателĕ Г.Месяц академикăн тӳпи çак çĕнтерӳре уйрăмах пысăк.

Çакна та усăмлатар: Аркаим тени хăшĕсемшĕн авалхи хулашпа, ĕлĕкхи цивилизаци йĕррисемпе çеç çыхăннă (ку историллĕ курăм), теприсемшĕн Аркаим – аваллăх палăкĕ патĕнчи сăртсен сăваплăхĕ, хăвачĕ (эзотерикăллă курăм). Аркаимăн чĕмĕсене (духи) хăватпиллĕ 7 сăрт тытса тăрать.

Чи аслă ту, асамлă сăрт – Шаманка (Шаманиха, Сывлăх сăрчĕ тесе те калаççĕ). Ун тăрринче паломниксем лабиринт-спираль хывнă. Çак сăртăн икĕ сăмсахĕ те сăваплисен шутĕнче. Чи пысăкки – Ӳкĕнӳ сăмсахĕ (уступ Покаяния). Çак сăртран ĕнтĕ сăвап çулĕ тытăнать. Тепри – Несĕлсен сăмсахĕ (уступ Пегаса тесе те калаççĕ). Виççĕмĕш сăмсаха сăвап маршрута питех кĕртмеççĕ. Вăл Хĕрмăчаварсен сăмсахĕ (уступ Жриц) ятлă. Кунта реинкарнаци сăнчăрĕ усăмланать теççĕ.



Шаманкăна хирĕç Юрату сăрчĕ ларать (унăн тĕрĕкле ячĕ кăсăклă – Анаэл. Ыр сăвап тăвĕ, Хура курак сăрчĕ, Çăхан сăрчĕ ятсемпе те паллă вăл). Июнĕн 21-мĕшĕнче



хӗвел тухнӑ вӑхӑтра ҫак сӑрт тӑрринче Ҫут ҫӑлтӑра (Сириус) курма пулать теҫҫӗ. Юрату тӑвӗ ҫинче те спираль пур.

Шаманкӑран чи аякри – 50 ҫухрӑмра ларакан Влаҫ сӑрчӗ (е Чека тӑвӗ, Хаара сӑрчӗ тесе те калаҫҫӗ. Ҫӳллӗшӗ 558 метр). Кунта авалхи масарсем те, менгирсен (тӑрӑхла чулсен) аллеи те пур. Сӑрт ҫинче ҫӗр айӗнче ылтӑн выртать пулать, анчах ун патне ҫитме ҫук. Чека тӑвӗ пирки халапсем нумай, чи паллӑ хавха турӑ панӑ хӗҫе те аса илет, ӑна Чингисханпа та ҫыхӑнтарать.

Тӑн тӑвӗ (гора Разума) ҫинчи шӑплӑхра чӑнлӑх мӗнне ӑнланма, аваллӑх тӗрӗслӗхне ҫитме пулать тет. Сичӗ Пичет сӑрчӗ (Ҫиччӗмӗш пичет тӑвӗ, Куҫа курӑннисен сӑрчӗ) туристсен лагерӗнчен 7 ҫухрӑмра. Кунта интуиције, чун-сисӗме – «виҫҫӗмӗш куҫа» – уҫма пулать. Ҫак сӑрт ҫӳллӗ мар пулин те ҫӳл тӳпепе – космос хӑвачӗсемпе ҫыхӑннӑ.

Эзотерика курӑмӗ-тытӑмӗнче Караганка юханшывӗн те вырӑнӗ аслӑ: ҫак ҫырма та асамлӑ-сӑваплӑ пулнине манса каяр мар!

Историллӗ планра та, эзотерика тӗлӗшӗнчен те Урал кӑвапин йӗррисем чӑваш культуринче аванах курӑнаҫҫӗ! Тӑван халӑх кун-ҫулне пӗлекене Аркаим пӗрпеклӗхӗсем чӑвашлӑхра та пурри пит тӗлӗнтермест ӗнтӗ – истори тӗлӗшӗнчен пурте ӑнланмалла. Чӑвашлӑх тенинче ҫурри – иранлӑх. Иран халӑхӗсемпе хутшӑнса кайни вара Тӗп Азире, Китай чиккинче пулнине кӑна асра тытмалла.

## Ҫул-сӑвап

Аркаима ҫул-сӑвап (паломничество) тӑвакансем кашни ҫулах йышланса пыраҫҫӗ. Термен-хӑват тӑрӑхне ҫитсе курма ӗмӗтленекенсен йышӗн шучӗ ҫук. Шупашкарта пурӑнакан Ираида Васильева кӑҫал Аркаима кайса килчӗ. Ӑна сӑмах парар-ха.

– Сентябрӗн 22-23-мӗшӗсенче ҫӗрпе кун танлашаҫҫӗ. Хӗвел ҫурҫӗр ҫур чӑмӑртан кӑнтӑр ҫур чӑмӑра куҫать. Ҫак астрономи пулӑмне эпир Мускавра пурӑнакан тусӑмсемпе Аркаимра кӗтсе илме шут тытрӑмӑр (вӗсенчен пӗри – медицина наукисен докторӗ). Кӑнтӑр Урала кайса килес шухӑш тахҫанах пурччӗ, кӑҫал вара авӑнӑн 19-мӗшӗнче ҫӑмӑл машинӑпа ҫула тухрӑмӑр-тухрӑмӑрах. Тепӗр кунне каҫкӳлӗм авалхи хулаш вырӑнне ҫитрӗмӗр. Сӑвапҫӑсем (паломниксем) пуҫтарӑннӑччӗ ӗнтӗ унта – пӗр 150 яхӑн ҫын. Аркаима ҫитсен сӑваплӑ хутлӑха саламламалла, мӗн те пулин парне памалла, ҫутҫанталӑка тирпей кӳмелле.

Сӑвап тӑвассин хӑйӗн йӗрки. Хӑват тӑрӑхӗнче мӗнле йӑласем ирттермеллине тата вӗсене мӗнле пурнӑҫламаллине вӗрентекен пӗчӗк кӗнеке те пур – «Аркаим йӑли-йӗрки» ятлӑ вӑл. Пуҫтарӑннисем хушшинче йӗркесене пӗлекенсем нумай – вӗсем кунта темиҫе те пулнӑ. Аркаима ҫитрӗн-тӗк малтан Ӳкӗнӳ сӑрчӗн (уступ Покаяния) чӗмӗнчен ҫак тӑрӑхра ҫӳреме ирӗк ыйтмалла.

Ӳкӗнӳ (Каҫару) сӑрчӗн ҫамкине пысӑках мар чул спираль хывнӑ. Аслӑ Караганка шывӗнче пите ҫуса тасалсан сӑрт ҫине хӑпартӑм. Пурнӑҫра мӗн сиенлине тунӑ – ҫакӑншӑн Ҫӗр чӑмӑрӗнчен тата тӗнче уҫлӑхӗнчен каҫару ыйтмалла та илмелле. Чӑнах та чунра ҫӑмӑл пулса кайрӗ – сӑвап тума апла ирӗк пачӗҫ мана.

Ӑс-тӑн тасалса, лӑпланса ҫитсен леш тӗнчери атте-аннерен, тӑвансенчен каҫару ыйтрӑм. Манпа юнашар анне тӑнине туйса илтӗм ҫакӑн чухне. Вӑл



кӑштах кӑмӑлсӑртарах пулнине те ӑнлантӑм. Пит аса илместпӗр ҫав несӗлсене.

Шаманка тӑррине хӑпарма ирӗк илтӗм эпӗ Аркаим чӗмӗсенчен. Ҫӗрпе кун танлашнӑ ир хӗвел мӗнле тухнине курма Шаманка ҫине хӑпартӑмӑр. Авал ҫак лаптамра ҫынсем Хӗвеле, Вӗҫсӗр Тӳпене, хӑйсен туррисене, аслӑ хӑватсене кӗлтунӑ тата пуҫҫапнӑ. Халӗ вара кунта эпир тӑратпӑр: ҫут тӗнчене вӗҫӗ-хӗррисӗр уҫлӑх куҫӗ мӗнле курнине кӑштах та пулин ӑнланма тӑрӑшатпӑр. Тӳпе хӗрлӗ, кӗрен, кӑвак тӗссемпе вылять. Хӗвел мӗлкисем тухрӗҫ, ретпе йӗркеленчӗҫ. Ман куҫа руна ҫырӑвӗсем курӑнчӗҫ. Кайран вара тӳпе тӑрӑх ҫӗмрен вӗҫсе иртрӗ те ҫыру паллисем ҫухалчӗҫ.

Мана ҫавӑн пек ӳкерчӗк кӑтартрӗ Аркаим. Ыттисем те ҫакна курчӗҫ тесе каламастӑп эпӗ. Хӑшӗсем нимӗн те асӑрхамаҫҫӗ, кашни хӑй пек курать тӗнчене.

Ту тӑррине хывнӑ пурнӑҫ спиралӗпе утни те халӗ те чунра. Этемлӗх асӗнчи тӗнче тытӑмӗн тӑвӗ ҫине хӑпарса ҫут тӗнче тӑррипе утнӑ пек туйрӑм. Леш тӗнчери тӑвансене сума суман туйӑм та каллех вӑранчӗ. Эпӗ ӳкӗнсе каҫару ыйтни пиртен уйрӑлса кайнӑ тӑвансем патне ҫитрӗ пулмалла: Несӗлсен сӑмсахӗ ҫинче вӗсен кӳренӗвне туймарӑм.

Авалхи хулаша та кӗрсе куртӑмӑр эпир. Кунта истори, археологи. Наука чӑнлӑхӗ питех илӗртмерӗ мана – суймастӑп.

Ҫунат хӑватпа тулса таврӑнтӑм эпӗ Аркаимран. Урал кӑвапине аса илетӗп те ывӑнни те иртсе каять. Пӗрре кайса килнипех унӑн тарӑнӑшне ҫитес ҫук. Пӗрремӗш ҫулҫӳрев – ӑс-тӑна чунпа шайлаштармалли утӑм ҫеҫ. Тепӗр ен те пур: Аркаима пӗрре кайса курни те ҫителӗклӗ: вӑл санӑн чунунта яланлӑхах юлать, – вӗҫлерӗ сӑмахне Ираида Петровна.

Аркаимӑн чи паллӑ паломникӗ камне те аса илтермеллех туссене. 2005 ҫул. Майӑн 16-мӗшӗ. Караганка

хӗррине 4 вертолет анса ларать: иккӗшӗнче – патшалӑх ертӳҫисем, Челябинск облаҫӗн тӳрисем, тепӗр иккӗшӗнче – журналистсем. Раҫҫей Президенчӗ Владимир Путин Аркаим курма килсе ҫитет! Владимир Владимирович чӑвашлӑхпа ҫыхӑннӑ тепӗр хулаша кайни пирки те ҫырнӑччӗ «Самант»: аса илӗр!

Аркаим ҫул сӑвапӗн пуҫламӑшӗ Раҫҫей Президенчӗшӗн 2001 ҫултах тытӑннӑ тесе хакламалла. Владимир Путин ҫав ҫул Томас Клестер Австри президенчӗпе Венӑра тӗл пулать. Аркаимпа ҫыхӑннӑ материалсене панӑ май Австри президенчӗ ҫавӑн чух авалхи хулашпа, «хуласен ҫӗршывӗпе» ҫыхӑннӑ наука тӗпчевӗсене пӗрле иртнерме тата Кӑнтӑр Урала туристсен ҫулҫӳревӗсене йӗркелеме сӗнет.

Владимир Путинӑн 2005 ҫулхи ҫул сӑвапӗ Аркаима патшалӑх пахалӑхӗ кӳчӗ тесе пӗтӗмлетмелле. Ҫӗршывӑн никӗслӗ аваллӑхӗ текен хак илчӗ хулаш. Ҫакӑ вара авалхи тӑрӑха славян культурин тӗшши те тымарӗ туса хурать хӑйне-хӑй.

Хальхи вӑхӑтра Аркаимра туристсен лагерӗ, наука хули, урамри музей пур, Ҫутҫанталӑк тата Этем ҫуртне тӑваҫҫӗ. Аваллӑх палӑкӗ пирки литература нумай: наука тӗлӗшӗнчен ҫырни те, эзотерика курӑмӗпе «ҫутатни» те ҫителӗклех.

## Чӑваш культури тата Аркаим

Халӗ вара сӑваплӑ ҫулҫӳреве тухмасӑрах Аркаима ҫитме пулни, авалхи цивилизаци чӑваш культурипе мӗнле хӗресленни пирки чарӑнар. Чӑваш культурине пӗлекен-ӑнланакан ҫын авалхи хулаш планне пӑхсан – тӳрех аслӑ киремет ӗлккине (силуэтне) асӑрхать. Аслӑ киреметӗн чӑн ячӗ – учӳк. Шӑпах Аркаим тӗкӗрӗ ӗнтӗ чӑваш учӳкӗ.

Чӑваш Республикинчи ҫеҫ мар, Атӑлҫи тӑрӑхӗнчи бронза тапхӑрӗн хулашӗсем Урал культурипе – «Хуласен ҫӗршывӗн» цивилизацийӗпе тӑванлӑ. Туй-пӑхӑр ӗмӗрӗнчи хуласем пирӗн тӑрӑхра пӗчӗкрех. Вӗсенче нумай йыш вырнаҫман – ҫынсем сахал пулнӑ. Схеми вара ҫавах: ҫырма хӗрринчи ҫӳллӗ сӑрт, ун айккинче карман-хула.

Челябинск облаҫӗнчи Брединск районӗнчи тепӗр тӗнчипе паллӑ хулаш-палӑк пур – Синташта (Аркаимран тӳртен 30 ҫухрӑмра). Вӑл Тобол шывне юхса кӗрекен Синташта ҫырми хӗрринче вырнаҫнӑ. Унта пурӑннӑ ҫынсем ут кӳлсе урапасемпе ҫӳрени те паллӑ. Ҫавӑнпа синташтасем этемлӗхе лаша йӗвенлесе тата кӳлсе паракансем шутланаҫҫӗ.

Сӗм авалхи цивилизаципе чӑваш культуринчи тепӗр пайрӑш та куҫкӗрет. Синташтӑн ҫурҫӗр енче масар вырнаҫни те ӗлӗкхи чӑваш ялӗсен тата учӳкӗсен схеми пекех: ҫырма урлӑ ҫурҫӗрелле – масар. (Ҫӗнӗ Шупашкарти ҫамрӑк археологсем хулаш-киреметсене тӗпчени пирки «Самантӑн» 4-мӗш номерӗнче ҫырнӑччӗ.)

«Хула эл» культурин хулашӗсен тӗккисемпе пӗр килекен тепӗр пайрӑш – киремет карти. Киремет карти тӗрӗссипе тӗнче карти – мандала тӗсӗ. Мандала – ҫут тӗнче тата тӗнче уҫлӑх моделӗ. Чӑвашлӑх варианчӗнче тӑваткала учӳкре карта (хӳме) тытсах палӑртнӑ, тулаш ункӑна вара ятарласа палӑртман – мӗншӗн тесен ҫав ункӑн вӗҫӗ-хӗрри ҫук. Учӳкре вырӑн рельефӗпе мӗнле усӑ курни те Аркаим-Синташтӑри пекех.

Бронза (туй-пӑхӑр) тапхӑрӗнчи хулашсем вырӑнтӑрӑха пӗлмелли ориентирсем вырӑнне те пулнӑ. Чӑвашсен несӗлӗсем хальхи Чӑваш Республикин тӑрӑхне киличченех ҫак хулашсене мӑкшӑ-ирҫесен тата ҫармӑссен несӗлӗсем тӗн сӑваплатнӑ: пуҫҫапмалли вырӑн тунӑ. Кайран вара чӑваш несӗлӗсем ҫав вырӑнсенчен учӳк хывнӑ. Тӗп Азирен килнӗ пирӗн несӗлсемшӗн Аркаим схемиллӗ хулашсем тӑван культурӑн пайӗ пулнӑ.

Шел те, тӑван халӑхӑн паянхи чӗм культурине тишкерсен, унӑн сӑваплӑхӗ чухӑнланни тӳрех курӑнать, ӑна ытлашши «киреметлентерсе» яни те сисӗнет. Киремет авалхи тӗнӗн пайрӑшӗ ҫеҫ, унӑн пӗртен-пӗр тӗп тытӑмӗ мар! Киремете ытла акцентлани несӗлсен уҫлӑх-космос ӑнлавне тата ҫӗр анлӑш курӑмне чакарни ҫеҫ. Пирӗн чӗм культурӑра учӳк сӑваплӑхӗ сӗвӗрӗлнӗ тесех ҫирӗплетмелле пуль.

Киреметпе учӳке уйӑрасси тавлашуллӑ, вӗсем пӗр япала та, пӗр тытӑм мар. (Улӑп тӑприсене тивмӗпӗр, унта тахҫан ҫын (е ҫынсене) пытарнӑ). Киремет пек сӑвап вырӑнсем Индире, Китайра питӗ нумай. Вӗсем ҫутҫанталӑк чӗмӗсене – ҫырма, сӑрт-ту чун-сывлӑшӗсене палӑртаҫҫӗ (наукӑра ҫакна анимизм теҫҫӗ). Сӑмахран, ҫын ҫырмана сума сумасан ӑна шыв тавӑрать, тытма та пултарать, вара ҫын хӗне каять.

Киремет вӑл – сыхча. Чӑваш чӗм культуринче сӑваплӑ сӑртсем пӗччен вырнаҫман, Аркаим тӑвӗсем пекех вӗсем те ҫырма урлӑ хире-хирӗҫ ларса тухнӑ. Киреметсен тӗп функцийӗсенчен пӗри – учӳке сыхласси. Ҫапла вара, киремет ытларах пурнан пурнӑҫпа тата тӗнче сийӗсемпе ҫыхӑннӑ, учӳк вара турӑсем пурӑнакан уҫлӑхсемпе, вӑл вӗсен порталӗ. Учӳке яланах карта тытнӑ, мандалланӑ. Киремете вара карта тытмасса та пултарнӑ. Учӳкре ҫутҫанталӑка, хӗвеле тата уҫлӑха кӗлтуса-пуҫҫапса чысланӑ. Чӳклекен выльӑха та сӑваплӑ ту ҫинче пусман, айккинче тирпейленӗ, чӳк апатне те унтах активнӗ. Чӑвашсем лашана мӗнле пуснинех аса илер. Ҫак янавара картишӗнче пусман, ял хӗррине илсе тухса тирпейленӗ. Мӗншӗн тесен ҫын халӑх пурӑнакан ял учӳк тӗкӗрӗ шутланнӑ.

Ҫапла вара, Аркаим хулашӗ – ҫӳлти турӑсен тӳпери хулин схеми. Аркаим сӑрчӗсем вара – ҫулти тӳпесен термен-хӑват кӑвариcем. Чӑваш культуринче ҫапла тӗкӗрленет Аркаим.

Асӑрхаттарни. 2015 ҫулта эпир чӑваш чӗлхин тымарӗсем пирки ярӑм пуҫлӑпӑр. Ӑна хисеплӗ профессор Николай Иванович Егоров тытса пырӗ. Иран халӑхӗсем патне ҫавӑн чухне каллех таврӑнӑпӑр.

**Владимир СТЕПАНОВ**

***«Иртнипе малашлӑх чиккинче» проект ЧР Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви пулӑшнипе пурнӑҫланать***







# "Самант" тусĕсемшĕн хура çĕлен сăхни – ӳпре çыртса илнĕ пек кăна!

***Чи малтан çакна асăрхаттармалла. Енчен те «Самантăн» 2012 çулхи 8-мĕш номерне тупайсан, «Çĕлен пумилкки» статьяна тепĕр хут вуласа тухăр. Унта Патăрьел районĕнчи Упамса ялĕнче пурăнакан вутра та çунман, шывра та путман пĕр арçын çинчен çырса кăтартнăччĕ. Кăмпана (сарă кăрăç татма!) кайсан ăна аллинчен хура çĕлен сăхса илнĕ. Экстремаллă ĕç-пуç мĕнлерех аталанса пынине, «Самантăн» чăн-чăн тусĕсене темле çĕлен те, нимĕнле наркăмăш та хăрушă маррине çӳçенӳллĕн те хитрен çутатса панăччĕ журнал.***

«Çĕлен пумилкки» статьяна кам вуланă – çавă пĕлет те ĕненет ĕнтĕ: Упамса çынни  Владимир Никитич Вавилов (Митюк Вови) космоса та скафандрсăр тухма пултарать. Кам çак чăнлăх пирки иккĕленет, вĕсене хура çĕлен историйĕн кăçалхи тамашипе паллаштарар. Итлĕр апла çĕлен пумилккин малаллине!

Çĕр чăмăрĕ çинче кăна мар, Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕнче те август уйăхĕ пуçлансан килĕнче телевизор пăхса ларакан Митюк Вовин пиçсе çитнĕ хĕрлĕ помидор ас тивсе пăхас килсе каять. Пĕчĕк пахчара ахальтен-им пĕр йăран пăхса çитĕнтернĕ ăна? Ырă кăмăллă, хавас чунлă ӳсен-тăран куç хĕссе кăчăк чĕнет хăй патне! Килтен тухмасăрах, чӳречерен хытăрах кармашсан татма пулать-ха çимĕçне, анчах «Самант» тусĕсем нихăçан та нимĕнрен те ӳркенсе-юлхавланса тăман! Тапочки тăхăнса пахчана тухса кĕресси – ăнланмалла ĕнтĕ – темиçе делянка вăрман касасси мар!

Пĕчĕк пахчана хурт вĕллисене лартнă. Унта вара ялти чи йăваш пыл хурчĕсем пурăнаççĕ. Çу каçа никама та куçран сăхман, чечекрен чечеке çеç пĕр ывăнмасăр вĕçнĕ пыл романтикине парăннă чунсем. Мĕн каласси, пĕчĕк пахчана ыт-ахаль тухса кĕни те чĕрене тыткăнлать, Упамса ялĕнчен ниçта пĕр утăм тухмасăр 100 çул пурăнас килсе каять.

Ялтăр кулăллă хĕвеле ал сулса, çепĕç çемĕ шăхăрса пĕчĕк пахча алăкне уçать «Самантăн» тусĕ. Йăран хушшипе пынă чух вĕлле айĕнче темĕнле шланг выртнине асăрхаса ĕлкĕрет кăна Митюк Вови – лешĕ чĕрĕлсе тăрать те, пуçне ялт çĕклет те, çăварне карать те...

Пирĕн хăюллă тусăмăра пӳрт крыльцинчен 5 метрта, помидор йăранĕнчен 1 хăлаçра, тăр-кăнтăрла та ял варринче хура çĕлен сăхать те илет! Атьсем, эпир пурте пĕлетпĕр: «Самантăн» шанчăклă гвардийĕ нихăçан та ниçта та аптраман, аптрамасть, аптрамĕ те!!! Çур метра яхăн вăрăмăш хура çĕлен çине мăн кăмăллăн та кăшт куларах пăхса илет те Владимир Никитич – çепĕç кĕвве малалла шăхăрса каялла пӳрте чупса кĕрет. Ăнланмалла, тăван республикăри упа шăтăкĕнчи пĕр пĕчĕк ялта, хитре кăна пĕчĕк пахчара пĕр-пĕр кобра е тинĕс çĕленĕ сăхса илнĕ пулсан – инкек-тăк инкек пулатчĕ. Кунта вара ахаль хура çĕлен – vipera berus: телейлĕ çын Владимир Никитич! Помидор вара – асăрханăр татах та асăрханăр – пурнăçшăн чăнласах та хăрушăран та хăрушă çимĕç пулма пултарать. Çавна татма тухман пулсан Митюк Вовине нимĕнле çĕлен те сăхас çукчĕ.

Чăваш пурнăçĕнче йăла-йĕркене кĕнĕ меслетпе, наукăра вара традици шайне ларайман медицина шутланакан сиплевĕн мелĕпе пĕрер черкке çавăрса хурса хура çĕлен наркăмăшĕн хăватне «симĕс çĕлен» хаярлăхĕпе чакарсан хĕн курнă çын Патăрьел тĕп больницине шăнкăравлать.

Каллех пĕчĕк телей: урам варринчех ал айне çăмăл машинăллă тусĕ лекет. Çĕлен хĕнне тӳснĕ çынпа унăн шанчăклă юлташĕ асфальт тусанне çĕклесе «Васкавлă пулăшу» машинине хирĕç çĕмĕрттерсе тухаççĕ. Наркăмăш хăвачĕпе чунне тата сывлăхне ним хăрамасăр туптакана хăйне сăмах парар-ха.

– Çĕлен сăхнă хыççăн температура ӳсрĕ – 38,5 градуса çитрĕ. Тата кăмăл пăтранма тытăнчĕ. «Скорăя» çур вăрманта – ялтан 3 çухрăмра тĕл пултăмăр. Машинăран куçса ларнă чухне хăстарчĕ. Патăрьелне çитнĕ çĕре вара марафон чупма пултаракан спортсмен пек туйса илтĕм хама. Больницăра мана пĕр купа эмелпе кĕтсе илчĕç.

– Вавилов, – ыйтать тĕп врач, – сана унччен çĕлен сăхманччĕ-и-ха?

– Сăхнăччĕ.

– Унчченхи меслетпех сиплентĕн-и?

– Пĕрре тĕрĕсленĕ япала – чи шанчăкли!

– Хăвна мĕнле туятăн?

– Аптрамалла мар.

– Апла пулсан кăшт уçăлса çӳре. Юхма пасарне тухса кур, – сĕнчĕ мана тухтăр.

Пасар курса çаврăннă хыççăн çĕлен хĕнне тӳснĕ çынна тухтăр тепре тĕрĕслет. Ури-мĕнĕ мар, сăхнă тĕлтен ӳт татки те шыçăнманнине курсан чутах каялла кайса лармасть тĕп врач. Çуллахи ăшă, тӳлек, ытарайми кун Владимир Никитичшăн чип-чиперех вĕçленнĕ. Каçкӳлĕм вăл Чăвашри кăна мар, тĕнчери чи хитре яла таврăннă. Парада тухнă салтак пек килнелле ура çĕклесе çăмăллăн утнă. Каçхи апата вара пĕчĕк пахчинчен пиçнĕ помидорсем татса кĕнĕ.

– Туссем! Тепĕр страницăна уçма ан васкăр-ха! Кăна эпĕ – çĕлен хĕнне тӳснĕ Владимир Никитич калатăп. Тепĕр уйăхран мана çĕлен каллех чутах сăхмарĕ. Юрать ку хутĕнче пахчара мар – вăрманта! Атту намăс ял хушшинче тăр кăнтăрла çĕлен сăхтарса ларма. Вăрман панулмине пуçтаратăп ун чухне. Пăхатăп та – пӳрнерен пĕр шитре темĕнле интереслĕ турат выртать. Вара тин ăнлантăм: хура çĕлен вĕт ку! Пуçне çулçă айне пытарнă та хӳри кăна курăнса выртать, мана асăрхаман та çĕленĕ. «Пурпĕр панулми çиместĕн!» – тесе хăваласа ятăм вара ăна улмуççи кутĕнчен.

**Руслан АЗМАБАД**



# Манăн ĕмĕтĕм – Хусан!

***Ĕмĕт пур пулсан – çын çунатлă. Енчен те вăл пурнăçланчĕ тĕк – ниçта кайса кĕрейместĕн. Эпĕ çакна лайăх пĕлетĕп: пĕр вăхăтрах ташлас та, юрлас та, кулас та, йĕрес те, кăшкăрас та килет. Çунат шăтать, вăл сана çăлтăрсем патнех илсе улăхать. Ку туйăма сăмахпа каласа параймастăн.***

Çу пуçламăшĕ кăçал пит савăнтармарĕ, кашни кун çумăр çуни питĕ пăшăрхантарчĕ. Ĕмĕтĕм пурнăçланаймасть пулĕ тесе те шутлама пуçларăм. Анчах телей ман çинчен манман иккен. Кун лайăхланчĕ пек. Çапах çĕрле ыйхă час килмерĕ, çумăр çăвасран питĕ шиклентĕм. Ирхине вăраннă-вăранман аннерен çанталăк çинчен ыйтрăм. «Хĕвел пăхать», – тесен ура çине сиксе тăтăм. Урра! Аранах, тинех! Иртнĕ эрнере пасарта илнĕ хитре кĕпене тăхăнтăм та тусăма кĕтме тытăнтăм. Вунă сехетре эпир çула тухрăмăр.

Акă вăл манăн ĕмĕт: аякран курăнса ларать. Ун патне çитме 3 утăм юлсан чун-чĕре юрласа ячĕ. Пит çинче çул тăршшĕпех сӳнме пĕлмен кулă тӳпе тăрнех хăпарчĕ пуль – пĕлĕт те çиçсе тăма тытăнчĕ. Эпир Хусан кремлĕ патне çарăнтăмăр.

Çăмăл машина çинчен анса карман тĕкки (крепостная стена) енне утрăмăр. Кремль хапхи умĕнче Муса Джалиль палăкĕ. Паттăр поэтпа юнашар сăн ӳкерĕнсен шурă крепоçе кĕтĕмĕр. Шала кĕрсенех Кул Шариф мичечĕ куçа илĕртет. 1552 çулта Хаяр Иван элпӳ Хусана илнĕ чух Кул Шариф имам Мускав çарĕсемпе çапăçса вилнĕ. Ăна халалланă мичете 1997 çулта тума пуçланă, 2001 çулта туса пĕтернĕ.

Мĕн тери хитре вăл, пăхса ытараймастăн. Минарет тăрне те улăхса пăхас терĕмĕр. Хусана çӳлтен пăхас кенсем нумай, çавăнпа черетре те тăма лекрĕ. Улăхма вара çăмăл мар, пусмисем питĕ чăнкă. Хăпарса çитсен кăмăл тулса тăкăнчĕ: Хусан алă тупанĕ çинчи пек курăнать. Пĕрре те анас килмест каялла, анчах ытти çĕре те çитсе курмалла.

Тепĕр урама куçрăмăр. Куç умне Благовещенск соборĕ тухса тăчĕ. Вăл та питĕ илемлĕ. Хусанти историпе архитектура чи авалхи палăкĕ шутланать. Юнашар Сююмбикен çичĕ хутлă турулĕ (башни) ларать. Ун пирки темиçе легенда та пур. Уйрăмах пĕри килĕшет мана. Çамрăк Иван патша Сююмбике сăнне ӳкерчĕкре курнă та пикене савса пăрахнă. Ăна качча илесшĕн пулнă, анчах лешĕ килĕшмен. Иван элпӳ вара çавăнпа Хусана вăйпа парăнтарнă. Сююмбикен ирĕксĕрех качча тухма лекет. Анчах çак ăслă хĕр Мускав патши Хусанта хитре те çӳллĕ турул туса лартсан кăна качча тухма килĕшнĕ тет. Çичĕ кун та çичĕ каç хăпартаççĕ башньăна. Ăна туса пĕтерсен Сююмбике ун тăррине хăпарать те халăха сутас мар тесе сиксе вилет. Чи кăсăкли вара: элпи хăш еннелле сиксе вилнĕ – турул та çавăн енне чалăшни. Тайăлни 2 метр яхăнах.

Шел, башня тăррине хăпарса кураймарăмăр: хупă. Турул çумĕнчех Хусан ханĕсене пытарнă мавзолей та пур. Хула хăпартакансене чысласа лартнă палăка та курмасăр каймарăмăр.

Малалла Çĕр ĕçченĕн керменне çул тытрăмăр. Епле тĕлĕнмелле те пысăк çурт. Варринчи аркăра туй-пăхăртан (бронзăран) тунă пысăк йывăç ларать, турачĕсем çӳлелле кармашаççĕ, кермене çупăрлаççĕ.

Бауман урамне кайса килмесен Хусан куртăмăр тесе калама та май çук. Вăл фонтансемпе пуян: «Вутăш», «Кăвакарчăнсем», «Шапасем». Çакăнтах Богоявленск чиркĕвĕ ларать. Пĕрре пăхма вăл ытти чиркӳсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть пек. Анчах унăн чантурулне (колокольнине) пăхатăн та – таçта ют çĕршыва лекнĕн туятăн хăвна. Çав чан-турул темшĕн мана Инди киновĕсенче кăтартакан пысăк храмсен пайрăшĕ пек туйăнать. Тытнă та пĕрне Хусан хулине килсе лартнă тейĕн. «Шаляпин» ятлă отель те пур кунта. Унăн умĕнче вара Шаляпин палăкĕ ларать. Унран



аякрах мар «Нулевой меридиан» текен компас. Ун çине пăхсан тĕнчен кашни кĕтесси курăнать. Паллах ĕнтĕ, мăсăльмансен сăвапла хулине – Меккăна та çул кăтартать вăл.

Бауман урамĕнче тутар культурин асамат кĕперĕ те карăннă. Ятлă-сумлă çынсен – тутар çăлтăрĕсен – аллейи вырнаçнă кунта.

Чуна тыткăнлаканни нумай çак паллă урамра. Мана II Кĕтĕрне патша майрин кӳми питĕ килĕшрĕ: чаплă урапа çине ун пек те-кун пек те ларса сăн ӳкерĕнтĕм. Питĕ чаплă кӳме. Юмахри Кĕлпин (Золушкăн) каретинчен нимĕнпе те кая мар, тен, чаплăрах та. Хусан кушакĕ патĕнчен те ахаль иртсе каймарăмăр. Туйпăхăр чĕрчунăн кăмăлĕ мăй таранах тулнă: çынсем çине пысăк куçĕсемпе патша мăн кăмăллăхĕпе пăхса выртать. «Пуян çыннăн кушакки те тилĕ тытать», – текен каларăш пур пирĕн. Хусан кушакки мĕн тытатьши?

Акă ĕнтĕ эпир фонтансем патне те çитрĕмĕр. «Фонтансен парачĕ» ят панă ку кĕтессе. Каçхине иккен шыв сиккисем тĕрлĕ çутăпа выляма пуçлаççĕ, кĕвви те вăйлăрах юрлать. Шел, фонтансен каçхи балне курасси пулмарĕ. Кăнтăрла курни те теме тăрать. Пĕр енче – шыв пайăркисене таçта çити сирпĕтекен пысăк фонтансем, тĕпĕр енче – урама сыхлакан часовойсем пек тăракан шыв сиккисем. Çӳллĕ тӳпепе тавлашаканнисем те пур.

Хамăр çула малалла тăсрăмăр. Миллениум паркне çитрĕмĕр. Кунта Кул Гали палăкĕ тата вĕресе тăракан пысăк хуран – казан – пур. Хуран икĕ айккипе аçтахасем (драконсем) шыв кăлараççĕ. Вĕсен йĕри-тавра вара пĕчĕк аçтахасем – çĕлен-калта. Паркран аякрах та мар питĕ чаплă та пысăк çурт ларать. Ку – «Экият» пукане театрĕ. Унăн капăрлăхне куратăн та – пĕтĕм юмахри сăнарсем ахăртнех çак çуртра пурăнаççĕ пуль тесе шухăшлатăн. Манăн та çавăнта пурăнас килсе кайрĕ! Вăл юмахри чăн-чăн кермен пек ларать. Сисместĕн те – хитре юмахри пĕр-пĕр элпи (принцесса) пекех туйса илетĕн хăвна.

Юлашкинчен эпир ЗАГСăн çĕнĕ çуртне кайса куртăмăр. Вăл та питĕ хăйне евĕрлĕ. Тӳпи тăрринче пысăк чашăк ларать. Енчен те пĕр-пĕр каччă: «Авланнă чух тулькка Хусан ЗАГСĕнче пĕрлешетĕп!» – тесе пĕлтерсен – ăна каччă тухма хатĕр хĕрсем темĕн чухлĕн тупăнатчĕç пуль, иçмаса.

Хусантан мĕнле тулли кăмăлпа таврăннине пĕлесчĕ сирĕн! Атăлçире çакнашкал чаплă хула пулнишĕн чун савăнать. Унта кайса курнишĕн халĕ те хĕпĕртетĕп. Хĕллехи хулана та кайса курас килет – интереслĕ вĕт. Хусан, кĕт мана: часах çитетĕп!

**Неонила ПЕТРОВА**











# Асамлă каç

***Эх, тусăмсем, нумай юлмарĕ те-ха, кĕçех Çĕнĕ çул çитет те-ха... «Мĕнле ачапча, ара, ку?» – тесе шутлатăр ахăртнех ман пирки. Пĕртте апла мар, çирĕм тултарнине те тăватăмçулах паллă тунăччĕ. Апла пулин те халĕ те эпĕ Çĕнĕ çул çывхарасса пĕчĕк хĕр пĕрчи пек чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Ман шутпа, унран асамлăрах, илемлĕрех уяв тек çук. Паллах, пĕлтерĕшĕпе Çĕнтерӳ кунĕ çӳллĕрех картлашка çинче тăрать. Çапах та вăл хурлăхлă сĕмлĕ. Историн синкерлĕ страницисене аса илнĕ май ирĕксĕрех куççуль капланса килет.***

Эпĕ тĕп сăмахăмран айккинелле пăрăнтăм-ха. Мĕнпе çыхăннă-ха Çĕнĕ çула юратасси? Ачалăхранах тымарланса тухать ку. Астăватăп-ха, аттепе аннене ĕçĕсенче пылак кучченеç паратчĕç. Тулĕк уявчен тыттармастчĕç пире ăна, пытарса хуратчĕç. Килте шăллăмпа çеç юлсан эх, шыраттăмăр, шкапсемпе арчасене ухтараттăмăр... Шел те, чылай чухне тупаймастăмăрччĕ, вара аннене йăлăнма пикенеттĕмĕр. Сайра хутра пулин те, хушăран пирĕн «сунар» ăнăçупа вĕçленетчĕ çапах. Пĕринче шифоньер тăррине хăпартса хунă хайхисем пирĕн канфетсене. Вĕтĕр-шакăр курмасть, унта çитеймест тенĕ-ши?.. Асту пуль, эпир ĕнер кăна çут тĕнчене килнĕ пепкесем мар вĕт. Çĕнĕ çул парнисене шырассипе хăйне евĕрлĕ «стаж» та йĕркеленнĕ темелле. «Хветюк, икшер канфет илетпĕр те хутаçа типтерлĕ çыхса йăлт каялла хуратпăр», – тетĕп шăллăма. Ăна каласа итлеттерейĕн-и вара? Купăста ани çине кĕртсе янă качака пек хăтланма пуçларĕ вĕт: чи пысăк та тутлă канфетсене пĕрин хыççăн теприне хырăмне асатать. «Ай-уй, анне сисет вĕт капла. Уяв каç та кураймăпăр вара шăккалат тенине, шăршине те туяймăпăр», – тетĕп Хветюка. «Çавăнпа халь çисе юласшăн та эпĕ. Мĕн пăхса ларатăн, çи часрах. Атту кĕçех анне ĕçрен таврăнать», – терĕ вăл ним пулман пек. Калăн, тĕрĕслĕх ун енче. Эх, эпĕ те тӳссе тăраймарăм çав. Хам асли пулсан та, темшĕн ялан итлеттĕм шăллăма. Çавăнпа-тăр ялта та час-часах мана Хветюк аппăшĕ мар, йăмăкĕ тесе шутлатчĕç.

Пылак çимĕçе çисе лартрăмăр хайхискерсем. Хутаççене вырăнне хунăччĕ. Пукан çине пукан лартса Хветюка хăпартса янăччĕ ку ĕçе пурнăçлама. Унăн урайне анмалли кăна юлнăччĕ – пӳрте анне кĕрсе тăчĕ. Шăлтăр-шалтăр, хăлтăр-халтăр! Пукансем те, хамăр та урайĕнче йăваланатпăр. Ал-ура ыратса кайрĕ, макăрас килет. Анчах куççуль юхтарма та хăратпăр. Ну, намăс пулнăччĕ те пире ун чухне. Çук, анне пире вăрçмарĕ. Лăпкăн кăна темиçе сăмах каларĕ. Пĕрех хутчен ятлаçтăрччĕ. Хамăр мĕне тивĕçлине хамăрах пĕлетпĕр те... Ун хыççăн урăх капла хăтланманччĕ эпир. Шкапсене ухтарман тесе ăнлантăр эсир ахăртнех. Паллах, шыранă, анчах капкăна çакланман тек. Акă мĕн каласшăнччĕ эпĕ, хе-хе...

Тĕлĕнмелле те, эпĕ нихăçан та Хĕл Мучи чăнласах пуррине ĕненмен. Çапах ку мана елкăра савăнма, сăвă каласа канфета тивĕçме пĕртте чăрмантарман. Кам Хĕл Мучи сухалне çыпăçтарса, туя таклаттарса çӳренине аттепе анне уççăнах пĕлтеретчĕç пире. Тепĕр чухне мучи рольне калăплакана (аслă класра вĕренекен каччăна е кӳршĕ урамри арçынна) хамах палласа илеттĕм.

Вăрăм каникул чуна мĕнлерех савăнтарни пирки мĕн каласси?! Кăчăр-кăчăр юр çинчи вăййăсем мĕнлерех илĕртнĕ тата. Телее, эпир ӳснĕ чухне килсерен интернет тавраш пулман. Сехечĕ-сехечĕпе компьютер умĕнче минресе ларман эпир. Тăвайккинчен çунашкапа мар, ваннăпа ярăнаттăмăр: вăл аван шăватчĕ. Юр кĕлетке ăсталама та кăмăллаттăмăр. Атте шывпа сапса хытарса пысăк тăвайкки туса паратчĕ. Эх, вĕçеттĕмĕр!.. Шăллăм йĕлтĕр те сырса тухатчĕ. Анчах манран йĕлтĕрпе ярăнма вĕренесси пулмарĕ. Çемйипех елка капăрлататтăмăр. Уяв сĕтелĕ хатĕрленĕ çĕре хутшăнма юрататтăм.

Çак асаилӳсем çепĕç те ăшă туйăмсем вăратаççĕ. Çавăнпа хаклă та Çĕнĕ çул маншăн. Тунсăх пуссан е кулянмалли тупăнсан кирек хăçан та Çĕнĕ çул юррисем итлетĕп те, чунра ырă-ырă пулса каять. «Пурнăç илемлĕ вĕт-ха. Кусем – вăхăтлăх йывăрлăхсем кăна. Савăн, Ульпи», – тетĕп те хама, хурлăха туххăмрах çĕнтеретĕп. Ку юрăсем шанăç пиллеççĕ.

Урамра утă уйăхĕ пултăр, шартса хĕвел пăхтăр – ман чунра вара Çĕнĕ çул хуçаланать. Кун пекки те пулкалать. Юлташсем тĕлĕнеççĕ, ăнланмаççĕ. Пулинех, эпĕ уншăн пачах та çилленместĕп. Кашнин хăйĕн хавхалану çăлкуçĕ.

Туссемпе тăванăмсем валли юпа уйăхĕнчех парнесем туянма пуçлатăп. Елка теттисем нумай пулин те, çулсеренех çĕннисем илетĕп. Епле ĕлккен, хăйне евĕрлĕ вĕт-ха вĕсем! Куç хĕсеççĕ, илĕртеççĕ. Ăçтан пăрахса хăварăн ĕнтĕ сентре çинче? Елкине те чӳк уйăхĕнчех илемлететĕп. Тата маларах лартмалла та, аттепе анне хирĕç. «Çын мĕн калĕ?» – теççĕ пĕрмай. Тепĕр тесен, çын ялан мĕн те пулин калать вăл. Халăх çăварĕ хапха мар, хупса хураймăн. Уншăн сăмах авăртса пултăр. Сăлтавĕ пур-и, çук-и – пĕрех.

Ытти чухне рекламăна тӳсме пултараймастăп эпĕ. Çĕнĕ çул тематикипе ӳкернисене вара питĕ килĕштеретĕп. Асамлă уявпа çыхăннă илемлĕ фильмсене вара пĕр чарăнми курас килет. «Один дома» кинона, совет фильмĕсене вуншар хут пăхнă-тăр. Маншăн пурпĕр интереслĕ вĕсем.

Çĕнĕ çула кашнинчех килте кĕтсе илетĕп. Маншăн вăл – çемье уявĕ. Сехет йĕппи вун икĕ хут шаккасан пĕр-пĕрне парнесемпе савăнтаратпăр. Пĕлтĕр пирвайхи хут лотерея ирттертĕм. Билечĕсене хамах ăсталанăччĕ. Вĕсене ӳкерчĕксемпе, салам сăмахĕсемпе илемлетнĕччĕ. Тăванăмсем пурте кăмăллă юлчĕç. Вĕсемшĕн пысăк кĕтменлĕх пулнăччĕ ку. Тĕп парни – ачасен Шампань эрехĕ, «напиток» ĕнтĕ тепĕр май каласан. Ак тамаша, пăхатăп, вăл билета нихăшĕ те туртса кăларман. Шăллăма юриех пĕрне «телейлĕ» билетпа улăштарма сĕнетĕп ыттисем сисиччен. Каллех мана намăс кăтартасшăн çав яш: турткалашать тата. Пирĕн канашлăва илтрĕç çав тăванăмăрсем. Юратьха, илтмĕше печĕç.

Тепĕр йăла та пуçартăм: «асамлă» курупкаран виçшер хут листи туртса кăларатпăр. Кашнин çинче – ырă сунăмсем, çитес çултан мĕн кĕтмелли. Чи тĕлĕнмелли – вĕсем пурнăçланни. Ĕненмесессĕн хăвăр тĕрĕслесе пăхма пултаратăр. Хам тĕслĕхех илсе пама пултаратăп. Çĕнĕ ĕç, çĕнĕ йыш тата нумай укçа кĕтет тенĕччĕ мана. Шалт та палт хытса ларнăччĕ ун чухне. Ара, юратнă ĕçе улăштарма тĕлĕкре те тĕлленмен. Чăннипе вара шăп çапла пулса тухрĕ. Халь укçи-тенкине ăçта хумаллине те пĕлместĕп, енчĕке кĕми пулчĕ вĕт. Ку юрĕ-ха, аннене карта тулли путек-сурăх тухнăччĕ. Ют çын мар, хăй туртса кăларнă, вăт савăнса пăхать те халь кăтра çăмлăскерсене.

Эх, кĕçех Çĕнĕ çул çитет те-ха... Шел, хăвăрт иртет. Унăн пĕртен-пĕр япăх енĕ ку. Нимех те мар, питех пăшăрханмăп. Тепĕр Çĕнĕ çула кĕтме, хатĕрленме пуçлăп.

**УЛЬПИ,**
**Вăрнар районĕ**

# Ăçта-ши эсĕ?

*Мария Пахоменко юрланине илтрĕм нумаях пулмасть:*

*«Пусть вороны гибель вещали,*
*И кони топтали жнивье,*
*Мужскими считались вещами*
*Кольчуга, седло и копье.*

*Во время военной кручины*
*В полях, в ковылях, на снегу*
*Мужчины, мужчины, мужчины*
*Пути заступали врагу».*

Куççуль тухса кайрĕ. Эпĕ хĕрача чухне питĕ юрататчĕç çынсем «Арçынсем» ятлă çак юрра. Халĕ ĕнтĕ Мария Пахоменко та çут тĕнчерен уйрăлса кайрĕ, арçынсем арçынсенех качча илме тытăнчĕç, хĕрарăмĕсем те хĕрарăмсенех качча тухма пуçларĕç. Йĕркеллĕ арçын тупасси пысăк нуша пулса тăчĕ!

Чăваш Енре 1 миллион та 240 пине яхăн çын пурăнать. Çак йыша çурмалла пайлар те чун юратнă республикăра сахалтан та 620 пин чухлĕ ар тупăнать тесе йышăнар. Çак суммăна тата çурмалла пайлар та – çут тĕнчери чи чаплă республикăра 310 пине яхăнах арçын савăнса пурăнать тейĕпĕр. Усси вара вĕсенчен?

Шел, мана курмастăр, хаклаймастăр эсир. Вун çиччĕре мар пулин те ман пек чаплă хĕрарăм сахал пуль Чăвашра! Çемье çавăрма юрăхлă арçын вара çук – мĕн чухлĕ ырлăх ахалех кивелетватăлать! Упăшка пурнăçран сарăмсăр уйрăлса кайрĕ, темиçе çул иртсен чĕре лăпланчĕ те тепре качча тухас пуль терĕм. Йĕркеллĕ арçын вара çук та иккен Чăвашра!

Халĕ манăн Китай Халăх Республикине каймалла-и? Унта 1 миллиард та 300 миллион чухлĕ çын! Ăçта пăх – унта арçын! Суйламалăх пур. Анчах китайсен сăнĕ-пуçĕ шăп пирĕнни пекех мар. Çывăрса тăранайманран куçне ниепле те уçайман сăнлă упăшка пит кирлех-ши мана?

Чăн сăмахăн суйăйи çук – ытла та нимĕнрен те, никамран та хăрамаççĕ чăвашăн мухтавлă арĕсем. Пĕр кĕленче эрех тесен чунне шуйттана пĕр икккĕленмесĕр сутса яраççĕ. Пĕр пус укçашăн чи çӳллĕ йывăç тăрне хăпарса упăте пек кутăн çакăнса тăма пултараççĕ. Хĕлле арçынсенчен юр ыйтса пăхнă-и эсир, чипер хĕрсем? Пăхăр-ха, ан ӳркенĕр. Асăрхаттаратăп: сых ятне малтан лăпланмалли эмел ĕçĕр, темрен тем сиксе тухĕ атту (чĕре шаплатса çурăлса кайма пултарать). Вара кайса ыйтса пăхăр пĕр кĕреçе юр. Тĕлĕнмелле хитре юрă юрласа парĕ сире çав шăпчăк, юрне вара шеллĕ. Арçын юнне анализа парсан вăл 90 процент хыт кукарлăхран тăнине курăр.

Çемье пурнăçĕ çинчен шухăшлакан, арăмне ăнланма тăрăшакансем юлмарĕç пулас Чăвашра. Пĕр-пĕр объект шăлавар тăхăнса çӳрени, унăн антоми хăйне евĕрлĕхĕ, пĕтĕмĕшле илсен, пит нимех те пĕлтермеççĕ. Арçын тени чун-чĕрере янăрамалла!

Чăнлăхран părăнаймăн: çырăнаççĕ, мăшăрланаççĕ экстремалсем. Арăмĕ пурнăç çынни пуласса шанса çеç авланаççĕ пулмалла хăшĕсем (çавăн пек туйăнать). Хĕрсем-хĕрарăмсем, асра тытăр та асăрханăр: арçынсене шансан – 40 градус шăрăхра та нимĕн те мар шăнса вилетĕн.



***РЕДАКЦИРЕН.*** ***Журнала ярса панă чун кăшкăравĕ шухăша ярать. Мĕн сĕнмелле, мĕн тумалла? Çӳç те, ыйтăвĕ те вирелле – чĕвен тăраççĕ. Туссем, «Самант» пур чухне тĕнче пĕтмест: витре тулли гаранти паратпăр! Çырăнăр, вулăр пирĕн журнала, вара шыракан чунсем пĕр-пĕрне тупаççех! «Самант» чăн-чăн йĕкĕтсен-арçынсен, пикесен-хĕрарăмсен журналĕ! 2015 çулхи 1-мĕш çур çуллăхри çырăнăвăн цифрăллăнухратлă карттинккине аса илтеретпĕр.***

Туссем!
«Самант» кăларăмĕсене «Чăвашпичет»,
«Советская Чувашия»
киоскĕсенче туянма пулать –
асра тытăр!

| Кăларăмсем | | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Тантăш | Тантăш | **54802** | 274,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | САМАНТ | **73208** | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | ТЕТТЕ | **73771** | 143,52 | 114 | 111 | 90 |

# Сирĕн тус - «Джус»!



## 1.Эл-пике

Ольга Прохоровăна курсан чун савăнать: хĕр-упраç эталонĕ пекех туйăнать вăл. Сăн-сăпатпа та ÿт-пĕвпе пикесен çапла пулмалла тесе чиперккене Наци музейне кайса тăратас килет. Çап-çамрăк, 17 çулхи хĕр пек курăнакан Ольга качча тухни 10 çул ĕнтĕ, Богдан ывăлĕ те 7 çулта. «Этемлĕх асĕнчен çухалнă, юмах-халапра Шамахан элпике ятпа тĕтреленсе юлнă нихăçан ватăлми чиперкке мар-и пирĕн Ольга?» – тесе те ыйтас килет унран. Хăнана чĕнсе ыйтрăмăр та – çакна пĕлтĕмĕр.

Çитмĕл те çичĕ тинĕс леш енчен килмен иккен вăл пирĕн пурнăçа, Шупашкартах çуралса ÿснĕ. Вăтам пĕлÿ 1-мĕш номерлĕ лицейра илнĕ, икĕ аслă шкултан – И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ тата Патшалăх службин Атăлпа Вятка академийĕнчен вĕренсе тухнă.

Тĕлĕнмелле те: шкул çулĕсенче Ольга спорта юратсах кайман, физкультура урокĕсенче те тăтăшах юлхавланнă (ĕненес те килмест). Пĕвĕпе те туллирех пулнă (суймастпăр). Чун савнă каччине тĕл пулсан вара Ольга пурнăçĕ тĕпĕйĕрĕпе улшăннă. Анатолий – спортсмен, сăнă ывăтакансен тренерĕ.

Çапла вара «Самант» тусĕсене аслă юрату çинчен – сывă пурнăç йĕркине мĕнле юратни тата парăнни çинчен каласа парар.



## Юрату асамĕ

Пирĕн журнала вуламан хĕр-упраçсем юрату асапĕсĕрех хуйха кайса типсе хăраççĕ (е мăнтăрланаççĕ: кам – мĕнле). Мĕн тăвăн, чăнлăх пĕрре: «Самантсăр» кичем пирĕн пурнăçра. Журнал тусĕсен кун-çулĕ вара пач урăхла: çиссе тăракан телей вĕсен сăнне çутатать, ÿт-пĕвне хÿхĕмлетет. Журнал суять тесе шухăшласан, пирĕн Ольгăн сăн ÿкерчĕкне пăхăр – куртăр-и, ĕнентĕр-и? Анатолийпе паллашсан-туслашсан хĕр-упраç спорт асамĕн тыткăнне лекет. Унăн та ытлашши ÿтрен хăтăлса спортсменкăсем пекех йăрăс кĕлеткеллĕ, вăйхăват та хĕлхем сирпĕтсе тăракан сăн-куçлă пике пулас килет. Ытарлă каласан, кĕске вăхăт хушшинчех çут тĕнчене пач урăх пике – паянхи Ольга çитет.

***– Хитре мĕнле пулмалла? – ыйтрăмăр эпир чиперккерен.***

– Фитнес енĕпе тăрăшнăран, çавăн манерлĕн хуравлатăп. Хĕрсене, хĕрарăмсене йăрăс, яштака кĕлетке илемлетет. Кашни хĕр-упраç ÿт-пĕвне виçене лартма пултарать – ÿркенмелле мар кăна. Диета тавраш пулăшмĕ ку тĕллевре. Нимĕнле вăрттăнлăх та çук, чăнлăх пĕрре: тĕрĕс апат-çимĕç тата спорт – вара эсĕ модель картне ларнă чиперкке.

Ÿт-пÿ илемне курсан, ăна хăнăхсан – вара хăвна сăнасах тăратăн: ытлашши нимĕн те ан пултăр! Хускалмалла, тар тăкмалла. Пиçĕ те çămăл кĕлетке мĕнле кăна авкаланма пултарнинчен ху та тĕлĕнен: «Эпех-и ку?» – тесе те ыйтатăн хăвăнтан. Ĕненес килмест!

## 2. Юрату пуçламăшĕ

Мăн кăмăллăх мĕнне пĕлмен Ольга пĕлĕтрен аннă чиперкке пек пулса тăрсан Шупашкар пикисене те илем çĕр-шывне ертсе кайма шут тытнă. Сывлăхшăн усăллă ĕç пуçарса яма – фитнес-клуб уçма тĕллев лартнă. Укçатенкĕ хĕсĕкрен кредит илнĕ, нумай япалана сутма тивнĕ – çав шутра çămăл машинăна та, хаклă кĕрĕке те.

***– Тренажерсем питĕ хаклă. Чи йÿнни те 40-50 пин тенкĕ.***

– Халĕ, ура çине тăнă хыççăн, бизнес класлă тренажерсем çеç туянатпăр. Хаклине хаклă та – шая тытса пымаллах! Малтан вара мĕнле йывăрччĕ.

***– Пуçа вĕçĕмсĕр шухăш пăралать тени ĕнтĕ ку. Чун ниçта кайса кĕреймест.***

– Тÿссе курмасăр ăнланма çук çак сăмахсене. Стресс çĕклемĕн йывăрăшне пĕлтĕм çавăн чухне. Чун-чĕрене лăплантарас тесе çÿçе те кастарса ятăм. Çÿç вара – юри тенĕ пек, таврăс шутлăн – час ÿсмерĕ. Халĕ вăл хăш вăхăтра ÿссе каять, ун чух вара... Урăх вăхăтра, урăх пурнăçра пурăнтăм ун чух.

## 3. Юрату тӗнчи

«Джус» фитнес-клуб 2013 ҫулхи кӑрлачра ҫуралнӑ. Уҫӑ алӑксен кунне йӗркеленӗ Ольга. Финанссем романссем юрланӑран реклама паманпа пӗрех.

– Сараппан радиовӗ ӗҫлеме пуҫларӗ те ҫынсем пыма тытӑнчӗҫ. Ҫӗрле 11 сехетчен ӗҫлеттӗмӗр, кайран хамах урай ҫӑваттӑм, тирпей кӳртеттӗм. Мӑшӑрӑм клуб тренерӗ вырӑнӗнчечӗ, – аса илет Ольга.

***– Паян «Джус» фитнес-клуб мӗнлерех сывлать?***

– Чи-чи ҫӗнӗ йышши тренажерсем лартса тултарнӑ пысӑк (200 ытла тӑваткал метрлӑ) зал курас килет пулсан – тархасшӑн кӑна. Аэроб (ҫӑмӑл упражненисен) залӗ те пысӑкӑшӗпе 100 ытла тӑваткал метр. Сауна, душевойсем – пурте пур. Саунӑпа кӑшт мухтанса илес-ха. Ӑна натураллӑ материалсенчен тунӑ, шыва кӗмелли вырӑна вара – Ҫӗпӗр кедрӗнчен! Фито-барта кислород коктейлӗ, спорт ӗҫмисене тутанма пултаратӑр. Пирӗн турбо-солярий пирки чӑнласах та чӑнкӑ темелле – вертикаллӑ вӑл! Чаплӑ лампӑсем, уҫӑ сывлӑш юхӑмӗ, ятарлӑ кремсем чиперккесемпе харсӑрсене татах та хитрелетеҫҫӗ, хӗлле те ҫуллахи пиҫӗхпе савӑнтараҫҫӗ.

***– Тренажерсене: «Тимӗр – тимӗрех: унӑн хӑвачӗ ҫынна хал парать», – тесех хакламалла. «Джус» фитнес клуба ҫӳреме кӑмӑллӑ ҫеҫ мар, хаваслӑ та илӗртӳллӗ тенине те илтнӗ.***

– Пирӗн фитнес-программӑсен кӑшӑлӗ ӗҫлет. Программӑсене ушкӑнланӑ, ҫавӑнпа вӗсемпе усӑ курма ансат та меллӗ. Хуть те кам валли те ӑна юрӑхлине тупатпӑр. Клубра ӑшӑ кӑмӑл, чун вӗҫевӗ пулмаллах ӗнтӗ. Кашни кунхи ӗҫре ҫакна яланах асра тытатпӑр. Кунсӑр пуҫне ӑшӑ кулӑллӑ конкурссем, ӑмӑртусем иттеретпӗр. Хавхаланса, хаваспа, хастар хутшӑнаҫҫӗ вӗсене «Джус» тусӗсем.

## 4. Сунни-сӗнни

***– Кун темле пылак та илемлӗ пулсан та ирпе вырӑн ҫинчен тӑрас килмест тесе пӑшӑрханакансем те пур. Мӗн сӗннӗ пулӑттӑр йывӑр ыйхӑллисене?***

– Начар ир ҫук! Лайӑх кун вара ырӑ иртен пуҫланать. Вӑрансан вырӑн ҫинче выртма сӗнместӗп, тутлӑн карӑнса илӗр те ҫӑвӑнма кайӑр. Ирпе ҫӑмӑллӑн вӑранассине каҫпах хатӗрленмелле. Ҫывӑрса каяс умӗн ыран мӗнлерех кӑсӑклӑ, ӗҫ-пуҫпа тулӑх кун пулать тесе шухӑшламалла. Тен, ырана нимӗн те палӑртман эсир, ним интересли те ҫукрах пуль тӗрӗссипе, пурпӗр темӗнле тӗшӗ тупмаллах: пурнӑҫ ытарлӑ та асамлӑ!

Пӗлтерӗшлӗ тепӗр самант – сирӗн кӑшт выҫӑ вӑранмалла. Ҫутҫанталӑк туйӑмӗсене пӑхӑнакан организм сире сӗтел патне хӑвалатӑр. Апла пулсан, каҫа хирӗҫ йывӑр апат ҫимелле мар. Сӑн-пит якалӑхӗ-чӑмӑрлӑхӗ валли те аван ку: ҫӗр каҫа сӑн туртӑнса каймасть.

Эпӗ хам ирпе контарстлӑ – вӗри-сивӗ шывпа ҫӑвӑнатӑп. Юн тымарӗсем сарӑлса пӗрӗнни ӳттире тонус тытса тӑма пулӑшать. Алӑсене чавса таран сивӗ шывпа ҫуни аван. Кӑмӑл пулсан хӑвӑрт кӑна ҫӑмӑл пӗв-турам (зарядка) тума та юрать: тӑсӑлмалла, пӗшкӗнмелле, пилӗке, купарчасене ҫавӑрмалла. Пӗв-турам комплексӗн ҫӑмӑл пулмалла, мӗншӗн тесен хӑвӑр ура ҫинче пулсан та организм пӗтӗмӗшле тӗлӗрет, ӑна вӑранма пулӑшмалла.

Ирсерен эпӗ пӗр чашӑк хура кофе (сахӑрсӑр, сӗтсӗр!) ӗҫме хӑнӑхнӑ. Вӑл чӑнах та ыйӑха тӗпӗ йӗрӗпе хӑваласа яма пулӑшать. Ирхи апат тума ан манӑр – ҫакна та асӑрхаттаратӑп. Вӑл организма ӗҫлеттерсе ярать, ӳт-пӗве халпа тултарать.

***– «Самант» тусӗсене ыр сунасси йӑлара пирӗн. Мӗн калатпӑр вӗсене?***

– Вырӑссен паллӑ ҫыравҫи А.П.Чехов: «Этемре йӑлтах – ӑс та, чун та, пӗв те илемлӗ те селӗм пулмалла», – тесе калани нихӑҫан та кивелмест. Журнал тусӗсене хитре пулма, сывлӑх тата ӳт-пӳ пирки тӑрӑшма сунатӑп. Фитнесра кашни кун тар кӑларма чӗнетӗп. Ҫамрӑклӑха упрама, сывлӑха ҫирӗплетме, чиперлӗхе сыхласа хӑварма, чун-чӗме пиҫӗхтерме пулӑшать ҫакӑ – пурте хамӑртан килет.

Сиенлӗ хӑнӑхусенчен те хӑтӑлма тӗллев лартӑр. Ҫуллӑ, углеводпа пуян апатран сивӗнӗр, пирус туртасси тата эрех-сӑра ӗҫесси пирки каламастӑп та. Вӗсен кӑмӑл йӑпатӑвӗ пӗр стӑрӑм ҫеҫ. Фитнеспа тусласшан – чун киленӗвӗ яланах чӗрере. Ӳт-пӳ те савӑнтарать: хӑват тапсах тӑрать кӗлеткерен, ыйхӑ тарӑн та тутлӑ, хӑвна хакласси те ӳсет, пурнӑҫ та лайӑхланать. Ҫитменлӗхсене пытаракан тумтир мар, хӑвна килӗшекен ҫи-пуҫ тӑхӑнма пултарни те мӗн тери лайӑх! Кӗскен каласан, фитнеспа туслашни – пурнӑҫ пахалӑхне пӗтӗмӗшле лайӑхлатни.

***– «Самант» тусӗсене асӑрхаттармаллисем ҫук-и?***

– Ҫакна асра тытӑр. Пӗр-пӗр самантра фитнес ҫине алӑ сулас та килӗ сирӗн – пулма пултарать. Мӗншӗн пурнӑҫа «кичемлетес»: мӗн юратнине ма ҫиес мар? Фитнеса пуҫӗпех путнине ҫывӑх ҫынсем те ӑнланмаҫҫӗ пек, кӑшт тайӑлман-и тесе те шухӑшлаҫҫӗ пуль. Ҫакӑн чухне кӑмӑлчӗм вӑйне хурҫӑлатмалла – малалла талпӑнмалла. Вӑхӑт иртсен тӗкӗр патне пырса хӑвӑра сӑнатӑр та – ӑнланатӑр вара: тӑрӑшни харама кайман! Эсир улшӑнса-хитреленсе пынине ҫынсем те асӑрхама тытӑнаҫҫӗ. Ҫакӑ сире татах та вӑй парса тӑрӗ, кӑмӑла хӑпартӗ. Пӗвпе чиперленсе пыни вара сирӗн чунӑра та хитрелетӗ. Яланах ас тӑвӑр, этемӗн чунпа та, ӳт-пӗвпе те хитре пулмалла.

Илемлӗ ҫын пулӑр, ан ӳркенӗр, хӑвӑра чӗрӗ тытӑр. Ҫакнашкал ҫынсемпе хутшӑнӑр. Вара хӑвӑр кӑна мар, ҫут тӗнче те тата хӳхӗмленнине асӑрхӑр эсир. Спортпа туслӑ пулӑр, ҫитӗнӳсем тӑвӑр!

**В.СТЕПАНОВ калаҫнӑ**



# Ылтӑн кимӗ

***Атӑлҫи вӑрӑ-хурахӗсем халӑх асӗнче хӑрушла романтиксем пулса юлнӑ: мӗн чухлӗ юрӑ-сӑвӑ хывнӑ вӗсем ҫинчен! Степан Разинпа Ермак Тимофеевич хыҫҫӑн чи паллӑ пиратсенчен пӗри – Галаня (Галанка) атаман, Галактион Григорьев. Влаҫ аллине лексен ирӗке тухса тарас талантпа та чапа тухнӑ вӑл: тӗрмерен пилӗк хут хӑтӑлма пултарнӑ! Атӑлҫи пирачӗ пирки мӗнле сӑмах ҫӳренине П.Мельников-Печерский «Тусем ҫинче» романра ҫырса кӑтартнӑ.***



Галактион Григорьев Чулхула тӑрӑхӗнчи Саблуково салинче ҫуралнӑ. Ку сала Васильск уесӗнчи Прудищенск вулӑсне кӗнӗ. Прудицы ялне вара халӑх ытларах Зверево тесе каланӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче ҫакӑнтан Зверь ятпа ҫӳренӗ вӑрӑ-хурах тухнӑ пулнӑ. Галаня ҫуралнӑ ял ятне те Атӑл хурахӗсен эшкерӗн ертӳҫине – Саблука – асӑнса панӑ. Усал халӑх пурӑнакан тӑрӑхра ӳснӗ Галактион Григорьев.

Ҫампӑк Григорьевӑн ирӗклӗ пурнӑҫӗн малтанхи утӑмӗсем Ӳсӗр ҫырмана (Пьяна) кӗрекен Имза юханшывӗ ҫинче пусӑннӑ. Хӑй тавра 15 пуҫтах пуҫтарнӑ та – ҫав тапхӑрти жаргон чӗлхипе калашле, «улпутсен килҫурчӗсене псалом юрлама ҫӳренӗ, аслӑ ҫул ҫине тухса купсасенчен тавар укҫи пуҫтарнӑ». Хурах эшкер Имза ҫырми тӑрӑх чавса тухнӑ ҫӗр пӳртсенче пытанса пурӑннӑ.

Вӑрӑ-хурах ӑсталӑхӗ ытлашшипех пулнӑ атаманӑн, чеелӗхӗ вара чиккине те пӗлмен. Пӗррехинче асар-писер ушкӑн арҫынсен Крестомаровск мӑнастирне тапӑнма шут тытать. Обитель стенисем вара ҫӳллӗ, тимӗрлетнӗ хапхи ҫирӗп – тӳрех пырса кӗреймӗн. Ҫитменнине тата манахсем ҫӗр айӗнчи вӑрттӑн ҫулпа мӑнастиртен хура вӑрмана тухма пултарнӑ. Тусӗсене Галаня хӗрарӑмла тӑхӑнма хушать. Турӑшсене пуҫ ҫапма килнӗ 16 «хӗрарӑма» манахсем хапӑл тусах кӗтсе илеҫҫӗ. Мӑнастире тупӑш паракансене кам юратмӗ? Хапха уҫсах кӗтсе илнӗ тетесем турра кӗл тума килнисене. Лешсем вара мӑнастир картишне кӗрсен хӗрарӑм тумне хывса переҫҫӗ те манахсене сухалтан ярса илеҫҫӗ, мӑнастир хысни ӑҫта упраннине ыйтаҫҫӗ. Тетесем тунма хӑтланаҫҫӗ, питӗ чухӑн пурӑнни пирки халап яраҫҫӗ. Хурахсем тытаҫҫӗ те манахсене кӑвайт ҫинче ӗнтме пуҫлаҫҫӗ. Шӑпӑр ҫунтарса ӑшаласа илсен хысна вӑрттӑнлӑхне уҫса параҫҫӗ хура тумтирлӗ тетесем. Галаня мула пӗр пус хӑварми шӑлса тухса каять, мӑнастире чӗртсе хӑварать.

Ҫакӑн пек «паттӑрлӑх» хыҫҫӑн хурах эшкерӗн Имза тавращӗнчен тарасси ҫеҫ юлать. Пуҫтахсем Чулхула уесӗнчи Оранск мӑнастирне ҫаратаҫҫӗ те Атӑл хӗррине каяҫҫӗ. Васильсурскран анатарах Фадеев тӑвӗсем ҫинче – Кстовопа Сӑр вӑрри хутлӑхӗнче йӑва ҫавӑраҫҫӗ. Сӗмсӗр эшкер йышлансах, хурахсен ҫулӗсем вӑрӑмлансах пынӑ. Хисеплӗ атаман Галанка Атӑлҫи пуҫ касанне тухнӑ: Чулхуларан тытӑнса Сарӑту (Саратов) таранах сехре хӑпартса тӑнӑ.

Хмелевка слободи патӗнчи унӑн вӑрттӑн стан – хулаш пулнӑ. Хурахсен йӑви икӗ тарӑн шырлан хушшинче, 90 хӑлаҫа яхӑн ҫӳллӗш сӑрт-сӑмсах ҫинче вырнаҫнӑ пулнӑ. Айккисенчен тата хыҫалтан шӳлмесем (ров) чавнӑ, ҫӗр тӗккисем (вал) хӑпартнӑ. Атӑл ҫинче ҫаратнӑ карапсен тупписене те илсе килсе лартнӑ хулаша – артиллери хӳттипех пурӑннӑ пуҫ касансем. Тем тӗрлӗ тупра упраннӑ хурахсен карманӗнче. Атӑлҫи пирачӗсем никама та уяса тӑман. Анчах Хмелевка ялне вара тытман. Унти ҫынсем пиратсене тӗрлӗ ҫимӗҫпе тивӗҫтернӗ, хӗрарӑмсем ҫӑкӑр пӗҫерсе парса тӑнӑ. Укҫине те лайӑх тӳленӗ Галанка, ҫавӑнпа слобода халӑхӗ тулӑх пурӑннӑ.

Патша ҫарӗсем вӑрӑ-хурахсен станне темиҫе те тапӑннӑ. Анчах Галаня е салтаксене сирсе ывӑтнӑ, е анаталла, Жигули тӑвӗсем патне, тарса хӑтӑлнӑ.

Влаҫ Атӑлҫире  йӗрке тума шут тытсан хурахсен пурнӑҫӗ йывӑрланнӑ. Галанкӑн та ҫӑтмах вӗҫленнӗ. «Чулхула наместничествин правленийӗн журналӗсенче» 1781 ҫулта ҫапла палӑртни пур. «Сӑр тӑрӑхӗнчи пӗр вӑрманта вӑрӑ-хурах эшкерне ярса илтӗмӗр, ҫыхса пӑрахнӑ Арефьев мещене вӗсенчен пӗри шӑпах хӗҫпе касатчӗ, ҫав усала тытрӑмӑр, ыттисем вара тарса хӑтӑлчӗҫ», – тесе хыпарлать вӑрӑ-хурахсене тытма янӑ Мавринский поручик... Допрос вӑхӑтӗнче ҫав усал хӑй хурахсен атаманӗ, каторгӑран тарнӑ хресчен Галактион Григорьев, Галанка тесе чӗнекенскер пулнине пӗлтернӗ».

Тепӗр ҫултан ҫав «Журналсенче» каллех Галанкӑна асӑнни пур. Каторгӑран тарнӑ хураха каялла тӗрмене ӑсатасси пирки сӑмах пырать унта. Атаманӑн сӑмсине касса ҫурнине те, хӗртнӗ тимӗрпе «вор» тесе клемесем ҫапнине те асӑннӑ унта. Тепӗр ҫур ҫултан 1783 ҫулхи февраль уйӑхӗнче Чулхула уес суччӗ Наместничество правленийӗне  ҫапла пӗлтерет: «Галактион Григорьев, вӑлах Галанка, унӑн ирӗкри юлташӗсем Василь (Васильсурск) хулинчен 60, Шумцы тавращӗнчен 5 ҫухрӑмри сӗм вӑрманта лартнӑ пӳртре пытанса пурӑнаҫҫӗ тесе пӗлтерет. Ҫав ҫуртра вӑл хӑй те унччен хӗл каҫнӑ, михӗ ҫӑнӑх та хӑварнӑ. Ҫав ҫурт ӑҫтине вӑл кӑтартма пултарать, унта вара хӗллехи ҫулпа ҫеҫ ҫитме пулать».

Ирӗкри юлташӗсем ӑҫта пытанса пурӑннине кӑтартатӑп тесе утаман сыхлавҫӑсене хура вӑрмана илсе каять, лешсен тимлӗхне улталаса тарма май тупать. Юр тарӑн выртнӑ пулин те таркӑна хӑваласа ҫитеймен

сыхлавçăсем. Галанка каланă вырăна вара пырса çаврăннах, анчах нимĕнле пӳрт таврашне те тупайман.

Çăва тухсан Галаня каллех хăнăхнă ĕçе пуçăнать – хурах пусма тытăнать. Балахна хулинчи капитан-исправник 1783 çулхи июнь уйăхĕнче Наместничествăна пĕлтернĕ тăрăх, çĕртмен 5-мĕшĕнче, çĕрле, Ярославльтен анакан купсасен карапĕсене Городец патĕнче, Анат Слободаран аялараx, 6 çынран тăракан хурах шайкки тапăннă. Тепĕр кунне 7 çынран тăракан эшкер çав тĕлтех тепĕр карапа çаратнă, хурахсен хушшинче паллă каторжник Григорьев та пулнă.

Галаня Хмелевка слободи патĕнчи хулаш-станнех таврăнать, ăна çĕнетсе тата хытăрах çирĕплетет. Юнашарах Васильсурск хули вырнаçни пĕртте шиклентермен ăна. Ку вăхăт тĕлне хула карманĕ çунса кайнă, пăшалçăсем (стрелецсем) вара, хĕсметшĕн тивĕçлĕ укçа тӳлемеççĕ тесе, урăх гарнизонсем тăрăх саланса пĕтнĕ. Галаньăна хирĕç тăракан вăй пулман Васильсурск таврашĕнче.

Ирĕклĕ этемсене вырăнти халăх пулăшса тăнă. Чун илли купсасем, пуянсем хăçан тата хăш çулпа ирттессине те пĕлтернĕ. Пиратсем почтăсене те тапăнма «юратнă». Халăха пусмăрламан пуянсене вара пуç касансем тивмен тет.

Галанкăн пурнăçĕ тĕрмере-каторгăра пăчланман, вăл хăйĕн хулаш-станĕнчех вилнĕ. Мĕне пула куçне хупнă – тĕрлĕрен калаççĕ. Пĕрисене ĕненсен, вăл йывăр чире пула хĕне кайса асапланса вилнĕ. Теприсен сăмахĕпе, шăнса пăсăлнă та – сывалайман.

Ирĕклĕ çынсем ăна питĕ чыслăн пытарнă. Атаман ӳтне пысăк кимĕ çине хунă, çиелтен ылтăн тултарнă. Галаньăна пытарма килнисенчен кашниех кимме мĕнле те пулин ылтăн япала е хаклă эреш хунă тет. Тупăк-кимĕ шыв тĕпне мĕн путса анса кайиччененех ылтăн купаланă пулать тесе те калани пур. Ĕмĕрлĕх канăç тупнă атаманăн ылтăн киммине ан хапсăнччăр, ӳтне чавса ан кăларччăр тесе Галанкăна вăрттăн çĕрте пытарнă. Тĕшмĕртнĕ тăрăх, Фадеев тăвĕсем таврашĕнчех, пиратсен станĕнчен инçетрех мар.

Галанкăн мул-туприне шыракансем XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX пуçламăшĕнче Васильсурскран 10-15 çухрăм анаталларах Атăл çыранне темĕн чухлĕ чавса тухнă. Анчах ылтăн тултарнă тупăк-кимме никам та тупайман.

Атăлçи хурахĕсен чи паллă атаманĕсене те асăнса тухар, вĕсем: Барма, Ляля, Заря, Роман, Янька (Яков), Степан Рамзай, Василий Рощин, Осип Полетаев, Константин Дудкин (Степан Кулагин), Сеня, Махон, Котюр, Курносов, Илья Рузавин, Савва, Фока. Кашни атаман тĕрлĕ çĕртре мул пытарса хăварнине калать халăх сăмахĕ. П. Мельников-Печерскийĕн «Вăрмансенче» тата «Тусем çинче» романĕсенче те Чулхула кĕпĕрнинче пытарнă мулсем пирки сăмахюмах нумай.

Атăл тăрăхĕнче хурах пуснă хĕрарăм утамансен ячĕсем те упранса юлнă. Балахна хулинчен анатарах Уляшка тата Парашка, Ветлуга юханшывĕ çинчи Троицки сали çывăхĕнче Степанида, Ветельма çырми çинчи Навашино тăрăхĕнче Наталья анемансем пуянсен сехрисене хăптарса тăнă. Çак хастар хĕрарăмсенчен чи палли – Степанида. Çитес кăларăмсенче ун пирки те, халăх асĕнче юлнă ытти хастар утамансем пирки те çырса кăтартăпăр.

**Ускатум КУНЦУЙ**


















# Ырлăх çинчен хурлăх курма-и?



Кĕтӳ хăвалама тухрăм. Хĕрарăмсем пĕр тĕле пухăнса ялти хыпарсене сӳтсе яваççĕ. Вĕсемпе хутшăнас темерĕм, ĕне пахчаналла ан уттăр тесе ун çумĕнчен хăпмарăм.

– Çĕр каç Микихвер Павăлĕпе Кăркка Çветланĕ Ануксен пахчинчен тухрĕç. Турăшăн та суймастăп. Хĕрес хывса кăтартма та пултаратăп, – çирĕплетрĕ вунпилĕк çул каяллах асанне ятне илтнĕ Кĕтерне аппа.

– Эй, тупнă тĕлĕнмелли! Мирунсен ывăлĕ авă, хăйсем начар пӳртре çеç пурăнаççĕ пулин те, çав тери пуян хĕр тупса янă, – сăмах хушрĕ тепĕр кинеми.

Вĕсене итлесе тăрса йăлт шăнса кайрăм. Ăшăнас тесе хăрах ура çинче транкки-транкки сиккелерĕм. Кĕрхи çанталăк – çулла мар. Урама ăшăрах тăхăнса тухмалла. Кĕçех çӳлти касран Марине сурăхĕсене хăваласа анчĕ. Нумай тăмарĕ вăл, хĕрелнĕ сăмсине аллипе хупласа килнелле чуптарчĕ. Хĕрарăмсем валли каллех калаçмалли тупăнчĕ. Хайхискере çине тăрсах «кăшларĕç».

– Асламăшĕпе кăна пурăнать те культура мĕн иккенне пĕлеймест. Халĕ пире сывлăх суннă пулсан чĕлхи хуçăлатчĕ-ши? Иртнĕ эрнере вăл Çеруш машинин ураписене шăтарнă тет-и? Хам курман-ха, кӳршĕсем систерчĕç. Ĕнер Хвекла: «Эй, Турă! Юбку ытла кĕске санăн, Марине, çил-мĕн вĕрсен?» – терĕ. Пĕлетĕр-и, çавăншăн пике кинемин карти-ракаткине веçех хуçса тухнă, – мăкăртатрĕ туя çине таяннă Маюк аппа.

Кӳрентерме юрамасть çав Маринене – куççульпех макăрăн тенине илтсеччĕ-ха. Икĕ çул каялла Чĕмпĕр хулинчен куçса килчĕ вăл пирĕн яла. Пăхсан кăмăллă пек курăнать. Анчах хăйĕнпе нихăçан та пуплесе курман.

Кĕçех пушă шартлаттарни илтĕне пуçларĕ. Кĕтӳ хăвалама тухса мĕн чухлĕ хыпар пĕлтĕм: ялта Темтепĕлейкинсем нумай çав.

Хĕрарăмсем салансан эпĕ те хапха алăкне чĕриклеттерсе картише кĕтĕм. Марине пуçран тухма пĕлмерĕ. Çавнашкал илемлĕ пике арçури пекех усал тенине ĕненес килмерĕ. Çын тем те калĕ вăл.

– Лису-ук! – тенипе шартах сикрĕм.

Сăнчăрти йытă та хапха çине тăрук сикнипе месерле кайса ӳкрĕ. Сиксе тăчĕ те найкăшса йăвине чăмрĕ.

– Лису-ук! – усрĕ хапахана хăна. Марине-мĕн.

– Уксус пур-и сирĕн? Кĕçĕр хырлăхра шашлăк пĕçересшĕн. Çуралнă кун манăн паян, – терĕ шăл хушшипе чăрт сурса.

Малтанлăха çухалса кайрăм, кайран хăвăрт тăна кĕтĕм. Марине пирки тахçанах очерк çырас тесе пурăнаттăм. Ак, телейĕм хапхаранах кĕрсе тăчĕ. Хăпăл-хапăл вăл мĕн ыйтнине илсе тухрăм. Чиперкке мана та хырлăха шашлăк çиме чĕнчĕ. Савăннипе пĕчĕк ача пек тăпăртăпăр сикрĕм. Кӳршĕ сас паман пулсан, тен, касченех ташлаттăм-и?

– Сирĕн ĕне пăруламан пулĕ те? Ытла та савăнăçлă эс, – терĕ кăн! пăхса.

Ăçтан пĕлес манăн? Чăнах та, пирĕн Тучкăн паян-ыран пăруламалла. Анне темиçе кун авă ăна сыхласа витерех çĕр касать.

Аран кун иртрĕ. Палăртнă вăхăтран кая юлас мар тесе чупсах кайрăм хырлăха ырлăх курма. Таврана шашлăк шăрши тĕлĕнмелле хăвăрт сарăлчĕ. Кӳршĕ ял анчăкĕсем ниçта кайса кĕрейми вĕрме тытăнчĕç. Хамăр ял йыттисем вара кăвайт патнех килчĕç. Вĕсем кăна-и: кушаккисем те курăнкаларĕç!

– Çухалăр кунтан! Çиччас сирĕнтен те шашлăк тăватпăр! – çухăрса ячĕ пĕр чиперукĕ.

Кĕçех Марине мана кăчăк туртрĕ те айккинелле илсе кайрĕ. Витрери аша çатмапа вут çинче ăшалама хушрĕ. Асламăшĕ мăнукне çур сысна тушкине парса янă ахăртнех – хĕрхенмен. Епле килĕштерсе те пĕр-пĕрне ăнланса пурăнаççĕ. Манăн анне пулсан ялти çамрăка тăрантарма çакăн чухлĕ какай нихăçан та парса ярас çук. Чăнах! Икĕ кушак ман тавра çĕлен пек явкаланма тытăнчĕç – мĕнле пĕлчĕç манăн ырă кăмăла, ăçтан сисрĕç хăйсене кучченеçпе хăналасса? Хăш татăкĕсене ывăтса парас тесе тăнă май ăнсăртран çатмана çĕре ӳкертĕм. Кушаксем тӳрех аш еннелле сикрĕç. Шăршларĕç те çăри-çăри çухăрчĕç. Какай ăшĕнчен темĕскер тухас евĕр сехĕрленчĕç. Ялалла ăмăртмалла тапса сикрĕç. Ăнланмасăр пăхса тăратăп. Какая мăр-мăрсем мĕншĕн çимерĕç? Сысна ашне тиркеме, мĕн, султан кушаккисемим вĕсем?

Тем тесен те йытта пăвса вĕлернĕ Марине шайкки, унтан... Пĕр тăхтамасăр чиперкке патнеллеваскарăм. Эпĕ мĕн сăлтавпа пынине ăнланчĕ ахăртнех вăл, пӳрнине тути тĕлне тытса тс! терĕ. Анчах тарăхнăскер:

– Кама йытăсăр хăвартăр? – терĕм шăртланса.

Хĕрнĕ çамрăксем мана пĕрремĕш хут курнăн тинкерчĕç.

– Кам йытти тетĕн-и? Ăçтан пĕлес манăн? Çамки çине çырман вĕт. Ну, атя, манăн сывлăхшăн ӳпĕнтер-ха, – тесе вăйпа алла сăра курки тыттарчĕ Марине.

Каччăсемпе хĕрсем сăмах мĕн çинчен пынине тĕшмĕртеймерĕç, какая çăвар тулли чăмларĕç.

Сăра куркине пушатсан темиçе минутранах тӳсмелле мар ыйхă пусса килчĕ. Тупата, кун пеккине хальтерех туйманччĕ. Темле асамлă вăй мана кĕçех хӳшше çаварса çапрĕ...

Хальччен илтмен темле кайăк юррипе вăрантăм. Чим, ăçта эпĕ? Хитре саслă тĕлĕнтермĕш кайăк йывăç çинех пырса ларчĕ. Çук-ха, тимĕр хĕрес çине... Масар çинче иккен эпĕ. Суймастăп! Хăрах калуш таçта. Ăçта тесе хыпашларăм та – вил тăприне хыпаларăм. Çӳçпуç вирелле тăчĕ... Çиçĕмле хăвăртлăхпа тухса тартăм çăва çинчен.

Йăлтах Марине ĕçĕ ку. Сăра çине çывăрмалли эмел янă вăл, ăнманскер! Мана, тăнран кайнăскере, тусĕсемпе çакăнта йăтса килсе пăрахнă. Урăхран хырлăха хур какайĕ çиме чĕнсен те ура ярса пусмастăп! Ниçта та каймастăп Маринепе! Ырлăх çинчен хурлăх курма-и?

**Петĕр ЛИСУКĔ**

# Кĕтӳ ярсан

***«Самант» журналта «Пĕрремĕш юрату», «Çамрăклăхра асра юлни» ярăмсенче çырса кăтартнă историсене вулатăп та питĕ ăмсанатăп хăшĕ-пĕрисене. Такамсене чутах вăрласа кайман, теприсен туйăмĕсем çулăм кăларса хĕмленсе çуннăран темĕнле майпа кăна тĕнчене пушар хыпман. Мĕнлерех вĕресе тăнă çынсен чунĕсем! Çĕр каçа тӳпери çăлтăрсене темиçе хут шутласа тухма куç тата чăтăм çитернĕ юратакан чĕресем. Шел, пӳрмерĕ мана çакнашкал – вулкан пек сирпĕнсе тăракан юрату. Мана никам та вăрласа та каясшăн пулмарĕ, хыçран мĕлке пек йĕрлесе çӳрекен те тупăнмарĕ. Çамрăклăх тинĕсĕнче цунами хумĕсем çĕкленмерĕç. Качча тухни те хăрушла интереслĕ пулмарĕ.***



Вопçĕм çакнашкал: каçпа сурăх кĕтĕвĕ янине курнă ĕнтĕ эсир? Макăра-макăра урампа чупса килет те сурăх юлташ, хапха уçса хунине курать те кил картине чупса кĕрсе те каять. Эпĕ те çавăн пекрех качча тухрăм пулмалла. Халĕ шухăшлатăп та – мĕнле ухмах пулнă вĕт-ха! Çамрăк чухне пире сурăх ăсĕ чухлĕ ăс-тăн та паххучĕпех çителĕклĕ-ши? Кĕске те хитре çамрăклăхăн тинĕсĕнче ылтăн пулă пек хумсемпе выляса ишсе çӳрес вырăнне чылай хĕр-упраç кĕтӳрен таврăнакан мĕскĕн сурăх пек çеç пулмалла. Çунатлă кайăк мар эпир – хапхине уçса хунă кил карти шыракан чĕрчун кăна!

Ĕç-пуça пĕтĕмлетсен – пулас мăшăра хамах авлантартăм темелле. Пĕлĕр эппин хăшĕ-теприсем мĕнле качча тухнине. Пĕрремĕш те пĕртен-пĕр юрату пулчĕ пуль ĕнтĕ вăл.

Педагогика институтне вĕренме кĕрсен Валя ятлă хĕрпе туслашрăм. Унăн виçĕ пиччĕшĕ общежитине килкелесех тăратчĕç. Аслă тетĕшĕсем хĕрсен куçне тасттанах, 100 çухрăмран курăнса тăракан каччăсемччĕ – çӳллĕскерсем, хитрескерсем. Кĕçĕнни, Аркадий, пĕвĕпе те, сăнĕ-пичĕпе те тетĕшĕсене çитейместчĕ – мана пит килĕшсех каймастчĕ вăл.

Институт хыççăн ялти шкулсене ĕçлеме ячĕç. Вальăпа иксĕмĕр çырусем çӳретсех тăратпăр (кĕсье телефонĕ çук ун чухне). Пĕррехинче ман пата хĕр тусăм пĕр каччăпа çавтăнса çитсе тăчĕ. Эпĕ мĕн? – туя чĕнме килчĕç иккен тесе шухăшласа илтĕм вĕсене курсан. Ухмах пулнă ĕнтĕ: качча каясси те туй тăвасси пирки шухăш пуçа мĕн нушаран тӳрех пырса кĕнĕ?

– Атя тепĕр эрнере пирĕн пата хăнана каятпăр, – сĕнчĕ Валя.

Килĕшрĕм. Тепĕр эрнере Канашра тĕл пултăмăр та тусăмсен ялне вĕçтертĕмĕр. Аркадий те Çĕнĕ Шупашкартан персе çитрĕ. Мунча хутса пачĕ пире, кирлĕ пулсан хăна хĕрне милĕкпе çапса кăна мар, çурăмне те çуса яма пулчĕ: сăйлав, сервис – высший сорт! «Ытла чăрманма кирлĕ мар», – тесе ăнлантартăм тараватта темĕн тума та хастар мунчаçăна.

Калаçкаласа ларнă май тепĕр шăматкун Шупашкарта тĕл пулас шухăш сиксе тухрĕ. Хулара пурăнакан Вальăн аслă аппăшĕ Светлана мана тахçантанпах курман, хăнана чĕнет тет. Светланăсем патĕнче каллех виççĕмĕр тĕл пултăмăр: эпĕ, Валя тата Аркадий. Тĕл пулни кăна мар-ха, Аркадийпе иксĕмĕр валли театра кайма билетсем те илсе хунă. Спектакль хыççăн Светланăсем патне таврăнтăмăр. Калаçса ларнă май кил хуçи мĕнле качча тухнине аса илчĕ. «Манăн туй кĕпи халĕ те шкапра. Сана та юрамалла вăл. Тăхăнса пăх», – сĕнчĕ Светлана. Эпĕ ыйттарса тămарăм – тăхăнтăм та ятăм. ЗАГСа кайма тухнă акăш-хĕр пек тĕкĕр умĕнче ярăнса çӳретĕп, питĕ килĕшрĕ туй кĕпи.

Аппăшĕ патне çĕр каçма Валя çеç мар, Аркадий те юлчĕ. Каччăпа пĕрле вырăн сарса парасшăнччĕ мана: «Юнашар выртăр!» – тет тараватт кил хуçи. «Çук! – тетĕп. – Мĕнле вăл çапла пулмалла?» Хама чăн-чăн паттăр пек – тапăнса килекен нимĕç танкне пĕр гранатăпах тĕп тунă Совет Союзĕн Геройĕ евĕрех туйса пĕчченех кĕрсе выртрăм диван çине. Хампа хам мĕнле мухтанмăн кун пек чух?!

Тепĕр эрнерен Валя çыру ячĕ: «Юр ларчĕ, атте-анне хур нумай усрать. Атя пирĕн пата тĕк татма каятпăр!» – тесе чĕннĕ. Пулăшмалла вĕт хĕр тусăма. Каллех Канашра тĕл пултăмăр та яла вĕçтертĕмĕр. Хур тĕкĕ татма вара ку хутĕнче эпир кăна мар – Вальăн виçĕ тетĕшĕ те çитнĕ! Нумай калаçса тăмарĕç аслă пиччĕшĕсем: «Санăн Аркадийе качча тухмалла. Тепĕр эрнере килĕшме пыратпăр», – тесе пĕлтерчĕç. Ун чухне кашни килте куккуклă сехет çакăнса тăратчĕ. Сехет ăшĕнчен сиксе тухакан çав куккук пекех пуçа сĕлтсе çеç ларатăп эпĕ. Юлташ хĕрĕн тетĕшне качча тухасси питĕ йĕркеллĕ япала, çавăн пек пулмалла та!

Киле таврăнсан аннене сых ятне: «Мана килĕшме килме пултараççĕ», – тесе асăрхаттартăм. Чăннипе вара те ĕненмелле Вальăн тетĕшĕсен сăмахне, те пустуй каларĕç – иккĕленетĕп-ха. Шăматкун вара, паччушки, çăмăл машинăллă тусĕпе Аркадийпе Валя персе те çитрĕç. «Çавăн пек-çавăн пек, хĕр килĕшме килтĕмĕр, – теççĕ иккĕн тан аннене. – Тепĕр эрнерен пирĕн атте-анне сирĕн пата хĕр çураçма килет, хĕрне вара паянах пĕрле илсе каятпăр. Пирĕн патра йăли çавăн пек», – тесе ăнлантараççĕ.

Анне веçех аптраса ӳкрĕ, çухалсах кайрĕ – хĕрне ӳстерсе çитĕнтерни, эпĕ качча тухма пултарассине вара пачах мансах кайнă. Шăллăм кăна чăх чĕппи пек савăннă. Эпĕ нимĕн пулман пек (патша майри мăнаçлăхĕпе) тухрăм та лартăм машинăна. Вĕçтере патăмăр Вальăсем патне. Тепĕр 3 эрнерен туй туса пăрахрăмăр. Çавăн пек!

**МАРТА**



***Тăван культура тӳпинче 30 çул каялла çăлтăрсем патне чĕнекен чĕнтĕрлĕ çĕнĕ кĕпер хывăнчĕ. Çулсем иртнĕçем уçлăх асамат кĕперĕ шупкаланмарĕ, унăн вут выляви çăлтăр картине çĕнĕ тĕссемпе илемлетрĕ.***
***Хаклă туссем! Светлана Асамата 30 çул каялла «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнекере пичетленнĕ ятпа саламлатпăр.***

# БИЛИТИС ЮРРИСЕМ

## Лирикăллă шурă сăвăсем

Пирĕн ĕмĕрччен 7 ĕмĕр кайри авалхи грексен поэзийĕнчен
Светлана АСАМАТ куçарăвĕсем

### АННЕ САМАХĚ

Анне мана ĕнтрĕкпе çăвать, хĕвелпе тумлантарать, çутăпа çиветлет. Уйăх тухнă-тухман, эпĕ урама пуçтарăннă чухне, ман пиçиххине хытăрах туртса çыхать.

Çапла калать: «Хĕрачасемпе кăна выля, ачасемпе ташла, кантăксенчен ан пăх, йĕкĕтсемпе ан калаç, тата пĕччен, тăлăх хĕрарăмсен сăмахне ан итле.

Пĕррехинче сана (пур хĕрсене те çапла) ташлакан параппанлă, юрлакан шăхличсемлĕ, вăрăм та хитре кӳмеллĕ тарантаспа лартса кайĕç. Çав кaçхине, Билито, эсĕ мана валли виçĕ пичке йӳçек хăварăн: пĕри – ир валли, тепри – кăнтăрла валли, виççĕмĕшĕ – уявсем валли».

### ЧУПТĂВĂМ

Пĕррехинче эпĕ хамăр пӳрт çумĕнче лараттăм. Иртен-çӳрен йĕкĕт çарăнчĕ. Ман çине пăхрĕ, эпĕ пуçа пăртăм. Манпа пуплесшĕн пулчĕ, эпĕ сăмах хушмарăм.

Вăл ман паталла утса пычĕ, эпĕ стена çумне тĕршĕнтĕм. Вăл тепĕр утăм тунă пулсан – çупса янă пулăттăм. Вăл каялла чакрĕ те, кусран пăхса, ал тупанĕнчен вĕрсе ман çинелле чуптăвăм вĕçтерчĕ: «Чуптăватăп, чуптăватăп», – терĕ.

Эпĕ кăшкăрса янипе – мана скорпион сăхнă пулĕ тесе хăраса ӳкнĕ анне чупса тухрĕ. Эпĕ: «Вăл мана чуптурĕ», – тесе ĕсĕклетĕп. Анне мана чуптурĕ, çупăрларĕ те киле илсе кĕчĕ.

### ÇУМĂР

Мана вĕтĕ çумăр йĕпетрĕ, çав тери шăппăн, çав тери ăшшăн.

Чăрăнмарĕ, татах та шĕпĕртетрĕ. Эпĕ йывăç айне тăтăм. Çара уран, урана тăхăнмаллине варалас килменнипе.

Çурхи çумăр таравăт. Йĕпенсе йывăрланнă йывăç çеçкисем тӳнсе каймалла тутлă шăрăшпа сапалаççĕ. Йывăç туни-турачĕсем хĕвелпе йăлтăртатаççĕ.

Ай-уй! Çĕр çине мĕн чухлĕ чечек çеçки ӳкнĕ! Ӳкнĕ çеçкене хĕрхенмелле. Шăлашăла лачакана перес мар. Пыл хурчĕсем валли пултăр, юлтăр.



### ТУПА

Шывсем, хăçан та хăçан юрлă-пăрлă ту тăрринелле юхма пуçлаççĕ; хăçан та хăçан тулăпа сĕлĕне тинĕс хумĕсен-йăранĕсен айне акма пуçлаççĕ; хăçан та хăçан кӳлĕсенчен хырсем, чуллă тусенчен кӳкĕрченсем шăтса ӳсме пуçлаççĕ; хăçан та хăçан Хĕвел хуралать, Уйăх курăк çине персе анать? – çавăн чухне эпĕ, тепĕр хĕрарăм шыраса тупсан, сана манса кайăп, манăн Билитис, ман пурнăçăмăн чунĕ, ман чĕремĕн чĕри.

Çакна мана вăл каларĕ, çапла каларĕ. Мĕн ĕç мана ытти? Телейĕм ăнран кайрĕ. Ман телейĕм пек телейли тата камăн та пулин пур-ши?

### КАÇ

Халĕ эпĕ ăна шыратăп. Кашни каçах килтен вăрттăн йăпшăнса тухатăп та вăрăм сукмакпа улăха утса кĕретĕп. Вăл кунта епле çывăрнине курас килнипе.

Эпĕ, темиçе хутчен те ун çине лăпкăн пăхса ларнă. Эпĕ ăна курнипе телейлĕ. Хамăн тутана ун тути çумне çывхартса унăн сывлăшне чуптунă.

Çумне выртатăп. Вăл манăн ытамра вăранать. Тăрас тесен те тăраймасть, эпĕ çупăрласа илнĕ, ямастăп. Вăл кулса ярать те, мана ыталаса илет. Çĕрĕпех вылятпăр.

Шурăмпуç сути, ма килтĕн? Халех-и? Тамăкăн мĕнле, хăш тĕттĕм кĕтесĕнче-шăтăкĕнче эсĕ пурри синчен те манса кайса, хăçанччен, пĕр-пĕрне чăрăнайми юратăпăр-ши эпир?

### ЮМАХСЕМ

Мана пĕчĕк ачасем юратаççĕ. Курнă-курман чупса пыраççĕ, кĕпе аркинчен туртаççĕ, урăран уртăнаççĕ. Вĕсем мана валли чечек татаççĕ, нăрă пуçтараççĕ. Нимĕн те çук чухне те ачашланаççĕ, хăйсен çумне лартаççĕ, питрен чуптăваççĕ, пуçĕсене кăкăрăм, чĕрçе çине хураççĕ.

Кусĕсемпе кусăмран тилмĕрсе: «Билитис, эсĕ пире Парисра Елена çинчен татах та каласа кăтарт. Эпир сана шăп пулса итлесе ларăпăр», – теççĕ.

### ÇЫРУ

Пулма пултараймасть, пулма пултараймасть... Йĕре-йĕре чĕркуçленетĕп. Хăрушă çыру çине ӳкекен куççуле ниепле те чараймастăп.

Пĕлетĕн-и эсĕ? Сана тепĕр хут çĕтерме мĕнле хăрушă вăл! Эсĕ ман пата тепĕр хут таврăнасса шаннипе питĕ-питĕ савăннă хыççăн.

Итлесем мана, килĕшсем манпа тепре тĕл пулма. Ыран, ĕнтрĕкпе, тăр хăвăр çурт умĕнче. Ыран мар-тăк, тепĕр кун. Эпĕ пыратăп. Ан хирĕçле. Тен, юлашки хут, анчах та... тепре, тепре çеç.Тархаслатăп сана, кăшкăрса ыйтатăп, йăлăнатăп.

Пĕлетĕп: манăн пурнăçăм сан хуравунтан килет.

***Туссем! Светлана Асамат архивĕнчен илнĕ сăнӳкерчĕк пирки ыйту парар. Миçемĕш класа каякан хĕр пĕрчине кăтартнă эпир? Кам малтан тĕрĕс хуравлать – çавна çыравçăран парне пулать!***



Ольга АВСТРИЙСКАЯ

# ЧĂЛАХ ПУКАНЕСЕМ

Пĕчĕк Анисса чупать-чупать. Ăçталла? Хăй те пĕлмест. Тавралла – сĕмлĕх, тĕттĕм вăрман. Пĕр çутă пайăрки те курăнмасть. Хĕр ача вара пĕччĕнех чупать-чупать. Ăна хăрушă. Мĕскĕн чĕри чĕрĕп пек пăчăртанать, хутланать. Шиклĕх туйăмĕ утăм тумассерен ӳссе пырать. Вăл пĕтĕм ăш-чике ярса илет, сивĕпе тултарать. Кашни тĕм хыçĕнче мекке çури е тискер чĕрчун пытаннăн туйăнать.

Анисса сивĕрен çӳçенсе илет. Вăл çӳхе кĕпепе, çăмăл санталипе çеç-ха. Чупать-чупать, питне туратсем çатлаттараççĕ, ури катмар та кутамас тункатасемпе ĕмĕрхи йывăç тымарĕсенчен такăнать. Аллине, пит-куçне – йăлт чĕрмелесе пĕтерчĕ хăрăк-харăк. Ăçта-ха çăлăнăç?

– Анне-е-е! Анне-е-е! – çине-çинех кăшкăрать Анисса.

Сасси ян! каять, ахрăмпа каяллах таврăнать. Анчах сас паракан çук. Аптранипе ĕсĕклесе йĕрет хĕр пĕрчи. Шултра куççуль тумламĕсем йăпăр-йăпăр юхса анаççĕ кĕрхи улма пек хĕрлĕ пит çăмарти тăрăх, çĕре патлатаççĕ. Вĕсем ӳкнĕ çĕрте туххăмрах тюльпансем шăтаççĕ те хĕп-хĕрлĕ çеçкине çураççĕ... Хĕр ача курмасть çакна. Малаллах ыткăнать, умра-хыçра мĕн пуррине асăрхамалли лару-тăру мар. Пĕр-пĕр ӳнерçĕн хăйне евĕрлĕ куравĕнче те мар вăл.

Чупса хăшкăлса та çитнĕччĕ Анисса. Кĕç тăрăнса анатчĕ-тĕр. Çывăхрах поезд ту-у-ут! кăшкăртни ăна тăна кĕртрĕ. Тăпăлт-тăпăлт тапакан чĕринче шанăç вучĕ чĕрĕлчĕ. Юлашки вăйне пухса сасă еннелле ыткăнчĕ хуйхăллă ача.

Ĕлкĕрчĕ. Тамбура ярса пуснă-пусманах поезд тапранчĕ. Калăн, ятарласа Аниссана кĕтнĕ вăл. Халĕ кăштах лăпланчĕ те хĕр ача. Транспорта ларнă тăк чугун çул ăçта та пулин çитеретех. Унта çын нумай-тăр. Вĕсем Аниссана пулăшĕç, ырă кăмăллисем акă килне те леçсе хăварĕç-ха. Çакнашкал шухăшсемпе айланнă хушăра пăштик-пăштик сывлани лăшланчĕ, чĕри тикĕсрех тапма пуçларĕ. Вара малалла иртме шут тытрĕ хĕр ача. Тен, пĕлĕшĕсене тĕл пулĕ е кампа та пулсан паллашĕ – çавах хаваслăрах.

Алăка хуллен тĕртсе уçрĕ Анисса. Умнелле тинкерчĕ. Тĕттĕмре мĕн пуррине уйăрма кансĕртерех пулин те, хăй мĕн курнине ĕненес килмерĕ унăн. Саксем çинче талккăшпех пукане ларать. Пĕр чĕрĕ чун та çук. «Ай-уй, кусене ăçта илсе каяççĕ? Мĕн туса лараççĕ вĕсем поездра?» – сасăпах ыйтрĕ Анисса. Хуравлакан тупăнмарĕ. «Юрĕ-çке, çынсем тепĕр вакунра-тăр... Пĕр пуканине асăнмалăх илес мар-ши? Атту аннерен тахçанах ыйтатăп. Вăл шав укçа çукки çине йăвантарать. Кунта ахаль те нумаййăн вĕсем. Пĕри çухалнинех сисмĕç», – пуç ватрĕ пĕчĕкскер. Тек иккĕленсе асапланмарĕ вăл. Хăйне килĕшекен пĕртен-пĕр теттене тупас тĕллев лартрĕ те шырама пикенчĕ. Юлашки аргумент ытти шухăш-туйăма хĕссе кăларчĕ.

Çутă çуккипе самаях тĕттĕм вакунра. Çавăнпа алла тытса пăхмасăр та тетте мĕнлерех пулнине уйăрса илеес çук. Поезд çаплах хура вăрман варрипе пырать пулас. Чӳречерен йывăççемпе вĕсен арăш-пирĕш мĕлки-кӳлепи курăнаççĕ, пĕри теприне ылмаштарать. Сĕмлĕх çаплах чакасшăн мар.

Сап-сарă кăтра çӳçлĕ чипер пукане патне пычĕ Анисса. «Ай, епле илемлĕ, ыттисене пăхмастăп та! Кил-ха, Илемпиçĕм», – тесе хайхискерне аллине илчĕ хĕр ача. Анчах самантранах йăл кулли пĕлĕт хыçне пытаннă хĕвел пек тарчĕ сăн-питĕнчен. Пуканен вăрăм аркаллă капăр кĕпи айĕнче икĕ ури те çук! Хурланчĕ ача. Ара, урасăр пуканепе мĕн тăвăн-ха? Кунашкал çĕмрĕккисем унăн хăйĕн те темиçе. Ăна вара чи чаплипи, чи-чи кирлĕ!

Теприне тытрĕ Анисса. Ак тата – унăн хăрах алли çук. Виççĕмĕшне илчĕ – сулахай пичĕ çĕçĕ-хачăпа таткаланă пек татăк-кĕсĕклĕ, пĕркеленчĕклĕ, пăхма та хăрушă! Ăна алăк еннеллех вăркăнтарчĕ хĕр ача. Чĕри тем ырă мара сиссе пасăрхинчен те хăвăртрах тапма пуçларĕ, тухса тарасла тĕпĕлтетрĕ. Шиклĕх туйăмĕ майĕпен таврăнса, мĕнпур чунне тултарса пычĕ. Йĕркипе тыта-тыта пăхрĕ пуканесене Анисса. Çаплах тĕрĕс-тĕкеллине тупма ĕмĕтленчĕ. Шел те, пĕри тепринчен хăрушăрах пулчĕ. Алăсăр, урасăр, çĕтĕк е çурăк тумлă, çунăк кĕлеткеллĕ, чалăш питлĕ, куççăр, лапчăк сăмсаллă, катăк туталлă, хăлхасăр (ун вырăнне пысăк шăтăк), тăрмаланчăк çӳçлĕ е вуçех кукша... Вакунран вакуна чупрĕ Анисса. Пĕр çынна та тĕл пулмарĕ. Кашнинчех – чăлах пуканесем çеç. Пасăр çак поезд çине ларма шутсăрах ăнтăлнине аса илчĕ хĕр ача. Халĕ тем пекех тухса тарĕччĕ – май çук. Çиçĕмле хăвăртлăхпа вашлаттарса пыракан транспортран мĕнле анса юлмалла-ха. Сикес – шăммашакка пуçтарса пĕтерес çук, хăвна вилĕм сунни кăна.

Хĕр ача ним тума аптăраса тăнă хушăра пуканесем пуçĕсене (пуçĕ пуррисем) çĕклерĕç те аллисене (алăллисем) тăсса Анисса патне çывхарма пуçларĕç.

– Тиркетĕн-и пире? Килĕшместпĕр-и? – çĕршер саслăн какăлтатрĕ пукане çарĕ.

– Анне-е-е! – амăшĕ инкекрен хăтарма пултарасса шанса кăшкăрчĕ ача.

– Анне тетĕн-и? Сана юратаççĕ, лăпкаççĕ, çапла-и? Эпир вара никама та кирлĕ мар. Тискерришĕн мар, çук. Яланах çапла чăлах пулман эпир. Çут тĕнчене киличченех тиркерĕç пире. Çапла вĕсем, аннесем. Пĕрисемшĕн нимĕн те шеллемеççĕ, теприсене хăйсемех тĕпсĕр çырмана вараççĕ.

– Ман анне никама та япăх туман! Ман анне усал мар! – чĕтре-чĕтре, куççуль витĕр хирĕçлерĕ Анисса.

– Ман-ман-мар-мар! – ахрăм пек илтĕнчĕ пуканесен сасси. – Эсĕ – пирĕн, сана пĕрле илсе каятпăр.

– Çу-у–ук! Пымастăп, çу-у-ук! Анне-е!

* * *

Хĕрĕ кăшкăрнипе шарт сиксе вăранчĕ Люба. Урайĕнче йăваланакан тапăчкине тăхăнмасăрах Анисса пӳлĕмне вирхĕнчĕ. Ара, ача тăрăшсах амăшне чĕнет-çке-ха.

– Хĕрĕм, чĕппĕм, мĕн пулчĕ-ха? Мĕншĕн макăратăн? Лăплан-ха, кил çумарах, – кăлăк чăххи пек кăлтăртатрĕ Люба.

– Анне, питĕ хăрушă тĕлĕк... Усал пуканесем... Вĕсем мана хăйсемпе пĕрле илсе каясшăнччĕ, – пӳлĕне-пӳлĕне, сăмах вĕçĕсене çăта-çăта каласрĕ хĕр ача.

– Атя, лăплан, вăл тĕлĕк çеç. Манса кай ăна, куратăн-и, пӳлĕмре никам та çук, – йăвашшăн пуплерĕ хĕрарăм, хĕрне пуçĕнчен шăлчĕ.

*(Вĕçĕ çитес номерте)*



Илемлĕх шкулĕ

# Чиперлĕх кĕтречĕ-3

## Ырă пурнăç сире, хаклă пикесем!

Паян эпир ӳт-пӳ хăйне евĕрлĕхĕсем пирки калаçăпăр. Шел, çутçанталăк пире пурне те эталонлă кĕлетке паман. Сăн-пите, ӳт-пĕве хакланă чухне куç чăн малтан тĕс çинче чарăнса тăрать (тĕс пирки кайран тишкерĕпĕр). Кайран вара – ĕлкке (силуэт) çинче. Ӳт-пĕве хакласси эсĕ мĕнлерех шăм-шаклă, кĕлетке еплерех пропорциллĕ пулнинчен, тумтирпе усă курса çитменлĕхсене мĕнле пытарма тата лайăхлăхсене епле кăтартма пĕлнинчен килет.

Мăнтăр та ырхан, вăрăм тата лутра кĕлеткесем пулнине пурте пĕлетпĕр. Тата ыттисем вара – пур-и вĕсем? Чăннипе вара ырхан кĕлеткесен те, туллисен те – темĕн тĕрлĕ пайташлăх (типы). Хутăш пайташлăхлисем те темĕн чухлĕ.

Тĕп ыйту эсĕ ырхан е самăрринче мар, ӳт-пĕв пропорцийĕсем мĕнлерех пулнинче. Пропорцилĕх – кĕлетке пайĕсем пĕр-пĕринпе виçисемпе шайлашăнса тăни. Пурте шута илĕнет кунта: урасен вăрăмăшĕпе çӳлти пĕв шайлашăвĕ, кăкăр сарлакăшĕпе пĕçĕсен виçисем, кăкăр хăш çӳллĕшĕнче вырнаçни те, пилĕк сарлакăшĕ те, купарчасем мĕнлерех пулни те, алăсен вăрăмăшĕ, пилĕкпе хулпуççисен тата пилĕкпе купарчасен хушши, ытти темĕн тĕрлĕ виçе.

Кашни кĕлетке валли «хăйĕн» тумĕ кирлĕ. Вăл мĕн вăрăмăш, пысăкăш пулни питĕ пĕлтерĕшлĕ – тĕплĕн виçсе кашни сантиметра шутламалла. Мĕнле тум тăхăнма юранине пĕлес тесен – чăн малтан хăвăн кĕлеткӳне пĕлмелле (каллех сантиметр таранах). Критик куçĕпе ӳт-пĕвĕре пур енлĕн те майлăн тишкерĕр те хаклăр, хыçалтан пăхма та ан манăр. Кĕлетке пайташлăхĕсем «панулми», «груша», «хăйăр сехечĕ» тесе пин хут каласа йăлăхтарнисем çеç мар. Ĕç-пуç чылай кăткăстарах!

Хăвăра «çĕнетме-илемлетме» пуçăнсан çын çӳллĕш тĕкĕр илĕр те унăн умĕнче нумай вăхăт ирттерме тытăнăр. Тепĕр сĕнӳ: хĕрарăмсен кĕлеткисене тимлĕн сăнăр. Вĕсене критиклеме мар, куç çивчĕшне, ӳнерлĕхне вăйлатма кирлĕ ку. Ыттисен çитменлĕхĕсене асăрхама хăнăхăр, вĕсен лайăхлăхĕсене палăртăр. Чăнлăх пĕрре: хĕрĕн чиперкке пулмалла. Енчен те ăна çуралнă чух çутçанталăк питех кăмăлламан-тăк – шăйрăксене тӳрлетме тивет.

Çапла вара, тишкерер-ха хĕрарăм ӳт-пĕвне. Кĕлетке пайташлăхĕсен пĕчĕк пайне илсе кăтартар. Хăвăра, тусăрсене тупăр ӳкерчĕксенче. Тумтир суй-





ласси ӳт-пӗве тӗрӗс хакланинчен тытӑнать!

Хӑвӑр мӗнле ӳт-пӗвлӗ пулнине тӗрӗс палӑртма пултараймарӑр-тӑк (ҫӑмӑл мар!) – lik1.ru сайта кӗрӗр. Сире килӗшекен-каякан тумтир ӗлккисене (силуэчӗсене), формисене, фасонӗсене онлайн-сайлавпа суйлама май пур.

Тепӗр урокра хӗрарӑм ӳт-пӗвӗн хӑйне евӗрлӗхӗсене тимлӗрех тишкерӗпӗр.

**Елена СТЕПАНОВА**







# Качча ил мана, савниҫĕм

***Кашни хĕрĕн темĕн пысăкăш вăрттăн ĕмĕчĕ пур. Питĕ вăрттăн пулсан та ҫав ĕмĕте пурте пĕлеҫҫĕ: хĕр шăпи юмахри пек, юмаха вара ĕненмелле, ал вĕҫҫĕн ҫĕклесе ҫӳрекен каччă тупăнатех, шăпах ăна качча тухать те ĕнтĕ пирĕн пике. Туй мĕнлерех пулмаллине те, кама чĕнмеллине те, кама чĕнме юраманнине те, мĕн ҫимелли-ĕҫмеллине те шутласа хунă мал ĕмĕтлĕ хĕрупраҫ.***

***Ним ҫĕнни те ҫук тĕнчере, пурнăҫ кăна кичем мар. Тен, йăнăшатпăр эпир? Качча кайма хатĕр-и тесе ыйтса пăхар-и хĕрсенчен?***

## Оля НИКОЛАЕВА.

Юратнă йĕкĕтех качча тухни – чăн-чăн телей. Анчах та ăшă йăва ҫавăрмалли пикесен темĕн те (пурне те) шута илмелле. Пулас упăшка тата унăн ашшĕ-амăшĕ мĕнлерех пулнине те картса хумалла. Енчен те пĕтĕмпех килĕшет, пĕрле телейлĕ пурăнассине чун туять пулсан – туй тума та юрать. Тепĕр япала пирки те калам. Ăнсăртран ҫие юлнине, ача пулассине пĕлсен – хăвăртрах качча сиксе тухма ан васкăр. Тен, телей патне илсе каякан ҫул мар ку. Васкакан вакка сикет тенĕ, ахальтен каламан пуль-ха ваттисем.

Ăна-кăна шухăшласан, хĕрсен 23-25 ҫулсенче качча тухмалла. 25-рен кая юлма юрамасть. Ват хĕр тесе тиркеме тытăнĕҫ кайран.

Хамăн туя таҫта Мальдиви утравĕсенче тума ĕмĕтленместĕп. Килте те аптрамасть, кафере тусан та юрать, анчах уяв чаплă та савăнăҫлă пултăр. Юнашар чи ҫывăх ҫынсем: аттепе анне, тăвансем тата юлташсем пулни те ҫителĕклĕ.

Уйăрăласси ҫинчен калаҫсан, эпĕ уйăрăлма хатĕр. Юрату сӳнчĕ пулсан, мĕншĕн ҫынна тытса тăмалла? Пурпĕр урăх хĕрсем патне чупĕ санăн мăшăру. Унпа вăрҫăнса, тӳпелешсе лариччен уйăрăлни лайăхрах. Ачасемпе унччен мăшăру ахаль те тĕл пулма пултарать.

Качча тухма чĕнессе чĕннĕ мана, анчах никам та ылтăн ҫĕрĕпе пырса алла ыйтман-ха. Мăшăрланма чĕннисенчен хăшĕ те пулин тепĕр тăватă ҫултан та шухăшне улăштармасан – ун чухне ним тăхтамасăр качча тухатăп ҫав ҫынна.

## Таня ТРОФИМОВА.

Туй туни хĕр пурнăҫĕнче урăх тапхăр пуҫланнине пĕлтерет. Ку ҫаврăмра улшăнусем кĕтетĕн, ҫĕнĕлĕхсем ҫитессине ĕненетĕн. Качча тухсан чунпа хытса лармалла мар, ҫивĕч те хаваслă ҫын пулмалла. Унсăрăн савнийӳпе мĕн виличчен пĕрле пурăнасси ытуллă.

Хĕрĕн миҫе ҫулта качча тухмаллине калама пултараймастăп. Кашни пикен чунне итлесе ҫĕнĕ тапхăра ҫĕкленме вăхăт ҫитнине туйса илмелле, вара качча тухмалла. Иртерех тухни пăсăклă мар, кайран (ăсланса ҫитсен) качча тухас килмест теҫҫĕ (пурте).

Юратман ҫынпа пĕрле, пĕр килте пурăнасси пулмасть манран. Юрату иртрĕ-тĕк – часрах уйрăлмалла, мĕншĕн тесен вăрҫăнса пурăнсан хăвăрăн сывлăхна пĕтеретĕр, тепре вара сире пула ачусем сиен кураҫҫĕ. Эпĕ ҫакна хамăн пурнăҫра пулса иртниччен пĕлетĕп.

Тĕрĕссипе каласан, хама ҫураҫнă хĕр вырăнĕнче пĕрре те курмастăп. Ҫавăнпа та – пулас туй мĕнле йăла-йĕркепе, чăвашла е вырăсла иртессине пĕлместĕп. Мĕн калаҫасси, качча чĕнекен те ҫук!

## Аня ИВАНОВА.

Пытармастăп: манăн питĕ качча каяс килет. Анчах та хальлĕхе никам та: «Качча тух!, – тесе шарламарĕ. Тен, ялти йĕкĕтсем арăм пулма сĕнĕç тесе ним ўркенмесĕр ĕне сума та вĕрентĕм – пурпĕрех мана пĕчĕккĕ тесе илмеççĕ. Тиркеççĕ! 18-ти хĕре пĕчĕккĕ тесе кўрентерме кирлĕ мар пуль те ĕнтĕ... Чунпа пысăк эпĕ!

Хĕрсен 18-20 çулсенче качча тухмалла, мĕншĕн тесен кайран, анне калашле, «анри уçăлса çитет» те вара качча тухас килми пулать. Хĕр-упраç мĕн чухлĕ аслăрах, мĕн чухлĕ укça нумай ĕçлесе илет, çавăн чухлĕ пĕччен пурăнма ăнтăлать.

Манăн туй вара чаплăран та чаплă пулĕ. Эпĕ тĕнчери чи хитре кĕпепе, вăл вара – хура костюмпа. Юнашар тек урăх никам та çук! Алла-аллăн тытăнса юханшыв хĕррипе утатпăр. Акă шап-шурă палатка патне çитетпĕр. Шалта – ЗАГСра хут уйăрттаракан. Вăл пире хăвăрт çырăнтарать те эпир çыран хĕрринчи шурă теплоход çине хăпаратпăр. Карапппа ишсе тăвансемпе, юлташсемпе савăнатпăр, ташлатпăр, юрлатпăр.

Эпĕ нихăçан та хамăн юратнă çынпа уйрăлмастăп, мĕншĕн тесен хам суйласа илнĕ çын мана мĕн виличченех савĕ!

## Оля ПЕЛЕШКОВА.

Хальхи пурнăçра качча кайни кирлех-ши? Пĕрре – укçа нумай тухса каять, тепре – туй туни эсĕ телейлĕ пулассине пĕлтермест. Пĕрлешмесĕр те телейлĕ пурăнма пулать. Манăн шутпа, кун пек 100 хут лайăхрах. Мĕншĕнне ăнлантаратăп. Енчен те пĕрле пурăнакан каччăна ĕçрен кăларсан – вăл ĕçме тытăнать. Эсĕ ĕçлени иксĕре çителĕксĕр. Çавăнпа бой-френдна (ўт-тусна) часрах çĕнĕ ĕç тупма ыйтатăн. Анчах вăл урса каять те вăрçăнма тытăнать (тен, сана хĕнеме те пуçлать). Çакнашкал лару-тăру сиксе тухсан хăш вăхăтра япалусене пуçтарса тухса кайса çĕнĕ пурнăç пуçлама пултаратăн. Качча кайнă-тăк – официаллă уйрăласса кĕтмелле. Тен, упăшка вара уйрăласшăн мар. Çитменнине, паспорт çинче те паллă юлать. Гражданский брак текеннипе пурăнма çăмăлтарах.

Хĕрсем ăна-кăна пăхса тăмаççĕ халĕ, çын вĕрентсе каланине те хăлхана чикмеççĕ. Каччăсемпе çавăрттараççĕ, хырăм юлсан часрах качча тухма тăрăшаççĕ. Вун саккăртах ача пăхса лараççĕ, вĕренесси те хыçала юлать. Упăшкапа пурнăç ăнмасан ниçта та тухса тараймастăн. Хăв та ним ĕç тĕлне те пĕлместĕн, ирĕксĕрех йĕре-йĕре çемье тертне чăтма лекет. Кун пек çемьесем нумай. Ахальтен мар ĕнтĕ хĕрсем пирки ваттисем: «Çўçĕ вăрăм та ăсĕ кĕске», – тенĕ.

Юлашкинчен манăн çакна калас килет: çамрăклах качча кайма ан васкăр. Малтан вĕренсе тухăр, кайран лайăх ĕç тупăр, вара тин качча тухас пирки шухăшлăр. Çемье çавăриччен пулас мăшăрăн характерĕ мĕнлине сăнăр – кайран йĕмелле ан пултăр. Чавса çывăх та...

**Неонила ПЕТРОВА**




© САМАНТ

**Аслă классенче вĕренекенсемпе çамрăксен журналĕ**

*ИНДЕКС*
*73208 (республикăра)*
*11467 (республика тулашĕнче)*

**1929-1991 çулсенче «Хатĕр пул!», 2003 çулчен «Çилçунат» ятсемпе тухнă**

11 (674) № 2014 ç.

*УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:*
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

Директор-тĕп редактор - **В.В. ТУРКАЙ**

Редактор - **В.СТЕПАНОВ.**

Компьютер дизайнĕ - **И.МИЛОВИДОВА.**

Пирĕн сайт: **www.hypar.ru**

Электрон адрес: **tantas@list.ru**

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр.,13, Пичет çурчĕ, «Хыпар» Издательство çурчĕ

Телефонсем: **56-00-67** **28-83-89**

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕ (Роскомнадзор) 2013 çулхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00310 № регистрациленĕ.

Хакĕ ирĕклĕ.

Журнала редакцире калăпланă, «Чувашия» ИПК» ПУП (И. Яковлев пр.,13) пичетленĕ.

Пичете алă пуснă: 19.11.2014. Пичетленĕ: 28.11.2014.

Хут формачĕ 60х84 1\8
Усл. п. л. 2,83.
Тираж 1194 экз.
Заказ № К-2090






*Анна ИВАНОВА*

*Гороскоппа – Йĕкĕреш. Аçтаха çулĕнче çуралнă. Ташлама юратать. Чунне илĕртекен тĕссем – кăвак тата сарă. Пушă вăхăтра амăшне пулăшать, интереслĕ кĕнекесем вулать.*






*Ольга ВОЛКОВА*

*Аçтаха çулĕнче çуралнă, гороскоппа – Арăслан. Ташлама, юрлама кăмăллать. Вĕтĕ шăрçапа тĕрлеме ăста. Тĕслĕ татăксенчен илемлĕ чечексем çĕлет. Юратнă çеçке – хĕрлĕ роза.*